*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

ХЫПАР

# ХРЕСЧЕН САССИ

ЮН КУН

14 (2426) [1]
Хакĕ ирĕклĕ
Эрнере икĕ хут тухать

2014,
нарăс, 26

1991 çулхи ака уйăхĕн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă

# Çĕр улми уявĕнче

**Ытти кунсенче Шупашкарти Николаев урамĕнчи ярмăрккăра çын нумай мар. Ку унта çитме кансĕртерехчипе çыхăннă-тăр. "Çĕр улми–2014" курава вара халăх йышлăн килнĕ. Машина лартма та вырăн çук. Суту-илӳ комплексĕн пĕрремĕш хутĕнче вăрлăх туянма килнисем черет йышăннă, хĕвĕшеççĕ кăна. " Ирхи сакăр сехетре виçĕ тонна илсе килнĕччĕ, самантрах сутăнса пĕтрĕ",– теççĕ сутуçăсем. Вăрлăха çавнашкал хăвăрт туянса пĕтернине астумаççĕ вĕсем. Вăрнар, Муркаш, Красноармейски, Элĕк, Комсомольски улмине пахчаçăсем питĕ кăмăлласçĕ. Курава йĕркелекенсем пенсионерсемпе инвалидсен нуши-тертне çăмăллатас тĕллевпе тӳлевсĕр леçсе паракан машинăсем уйăрнă.**

**Курава тата наука-практика конференцине хутшăннисен шухăш-кăмăлне ыйтса пĕлтĕмĕр.**



**С.В.ПАВЛОВ,**
**ЧР ял хуçалăх министрĕ:**

– Çакăн йышши форум пирĕн патра иртни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Курав çав тери пуян. 120 сортран хăшне лартса çитĕнтерессине хресчен хăй палăртать. Тыр-пул тата пахча çимĕç ӳстерекенсене патшалăх енчен пулăшмалли программăсене чакарманни çинчен тепĕр хут аса илтересшĕн. Ӳсĕмлĕ, тĕрĕс-тĕкел аталанакансене ӳлĕм те хавхалантарăпăр. Вăтаммисене çав шая çĕклемелле, продукцие тирпейлекен отрасле вăйлатмалла пирĕн.

Ырă хыпар пĕлтересшĕн. Раççей ял хуçалăх министерствине регионсен мелиораци программисене ырларĕç. Малашне шăвармалли техника туяннă тăкаксен 50 процентне таран саплаштарма пăхнă, хуçалăхсен хыснине çирĕплетме тунă курăмлă утăм ку.

**Е.А.СИМАКОВ,**
**Пĕтĕм Раççейри çĕр улми хуçалăхĕн наука- тĕпчев институчĕн директорĕ:**

– Пĕлетĕр-и: пирĕн çĕр-шывра çĕр улмин 346 сортне лартса тăваççĕ, вĕсенчен 167-шĕ – Анăç селекционерĕсем сĕнни. Ассортиментĕ пуç çавранса каймалла анлă, анчах пурте сертификаци витĕр тухайман.

Енчен те эсир продукцие тĕрлĕ çимĕç хатĕрлекен предприятисене ăсататăр пулсан – "Виктория", "Вымпел", "Бронницкий", "Фаворит", "Надежда", "Голубизна", "Колобок" сортсем сĕннĕ пулăттăм. Крахмал тунă çĕрте "Дива", "Лазарь", "Малиновка" сортсемпе усă кураççĕ.

Çĕр улмин çĕнĕ сорчĕсене пробиркăра, теплица условийĕсенче ӳстермелли хăйне евĕр кăткăс технологие наука-тĕпчев институчĕсем алла илчĕç. Ку тĕлĕшпе Америка е Европа селекционерĕсенчен ӳксе юлман эпир, хăшпĕр тĕпчев программисем ăнăçлăрах та. Наука шыравĕсене çĕр ĕçченĕ патне çывхартас тĕлĕшпе Чăваш Енри "Çĕр улмине мухтав" агрофирма пысăк ĕç тăвать. Пĕр сăмахпа, маттур тесшĕн.

**Н.И.ВАСИЛЬЕВ,**
**"Агроинноваци" предприяти пуçлăхĕ:**

– Асăннă форум тĕллевĕ – отрасльти ырă туртăмсене пахаласси, тупăша ӳстерекен проектсене çул парасси. Кашни çулах çĕр-шыври 30 ытла регионтан, Беларуçран, Казахстанран, Америкăран, Германирен, Голландирен çĕр улми ӳстерекенсем килни пире чыс тăвать. Малашне еплерех аталанасси пирки тĕплĕ калаçу пулчĕ. Малтан хамăр ăçта çитсе тухнине тишкертĕмĕр.

Американсем çĕнĕ сортсемпе вăйлă ĕçленине пурте пĕлетпĕр, хăйсене итлесе пăхни кăсăклăрах. Хамăрăн та кăтартмалли пур-çке. Калăпăр, Вологда облаçĕнчи "Крестина" хуçалăх кооперации мелĕсемпе анлă усă курать, вĕсен опытне Чăвашра сарасшăн.

**Р.И.ПЕТРОВ,**
**Вăрнар районĕнчи "Санар" юлташлăх ертӳçи:**

– Хуçалăха 12 çул ертсе пыратăп. 2013 çула илес тĕк – кăтартусем начар мар пирĕн. Тĕш тырă гектартан – 24, çĕр улми 200 центнер пухса кĕртрĕмĕр. Мĕншĕн сахал? Шухăшласа пăхăр-ха: çĕртме уйăхĕнче тăватă миллиметр нӳрĕк илчĕ тăван çĕр. Шывсăр антăхнă çын тутине йĕпе тутăрпа сăтăрса илнипе пĕрех ку! Утă уйăхĕнче те çумăр кĕтсе илеймерĕмĕр.

Çапах пуçа усман, хамăра пурăнмалăх тата сутмалăх туса илнĕ. Сухаласа акакан çĕр лаптăкĕ 1610 гектар, "иккĕмĕш çăкăр" валли çакăн 10 процентне уйăрнă. Икĕ çул каялла продукци япăх сутăннипе лаптăка кăштах чакартăмăр, халĕ вăл 170 гектара яхăн.

Йĕпе-сапара кăларнă улма вăрлăхĕн пахалăхĕ начар тенипе килĕшес килмест. "Виконта", "Рокка", "Импала", "Удача" сортсем чиперех хĕл каçрĕç. Вĕсене чир-чĕртен, хурт-кăпшанкăран хӳтĕлемелли майсемпе туллин усă курнă. Хуçалăх управçĕсене тăватă пин тонна пахча çимĕç вырнаçать. Иккĕмĕш управне виçĕ çул каялла хута янăччĕ. Улма çĕрмест.

Часах – çур аки. Кăçал Питĕртен кӳрсе килнĕ репродукцилене сортсене лартса пăхасшăн. Патшалăх пĕр тонна пуçне 9 пин тенкĕ субсидия уйăрсан тăкакăн пĕр пайĕ саплашăнать. Республика Пуçлăхĕ М. Игнатьев пирĕн павильон умĕнче чарăнса çапла ыйтрĕ: "Кăçал пĕлтĕрхинчен ытларах туса илме вăй çитерессĕн туйăнать-и?" Мĕн калас, кăмăл-туйăм чиперех пирĕн, тупăшлă ĕçлесшĕн. Чăваш ӳпкелешмест, йывăрлăхсене çирĕппĕн тӳссе ирттерет.

**В.П.КРАСНИКОВ,**
**Патăрьел районĕнчи "Красное знамя" хуçалăхăн тĕп агрономĕ:**

– Ĕлĕкренпех улмана хисепе хунă хресчен. Унтанпа ăна лартса тăвас ĕç мелĕ чылай улшăнчĕ, çакна курав та çирĕплетсе пачĕ. Агрономра сакăр çул тăрăшатăп пулин те вĕренмелли, ĕçе кĕртмелли пайтах.

Тупăш кӳрекен çăл куç – пĕрчĕллĕ культурăсем, лартмалли сухан вăрлăхĕ. Кашни çимĕçе тĕллевлĕн ĕçлесе пынă. Çĕр улми лаптăкĕ 230 гектар. Çанталăк ура хурса пынă тапхăрта та унăн тухăçне 200 центнертан чакарман. Вăхăтра кăларса пуçтарни – пĕр ăпала, ăна лайăх упрамалла-çке. Ку чухнехи технологие пăхăнса тунă управсене 3 пин тонна хуратпăр. Кĕр мăнтăрĕпе продукцин пĕр пайне хиртех сутрăмăр.

Çĕр улми пуссине икĕ сажалка тухать, хĕрӳ ĕç çинче икĕ комбайна тули хăватпа ĕçлеттеретпĕр. Кунсăр пуçне тепĕр комбайн туянас ыйту татăлчĕ. Хуçалăх вăрлăх туса илессипе специализациленнĕ май ял хуçалăх министерстви ирттернĕ конкурс витĕр ăнăçлă тухни вăй-хал хушать.

Самантпа усă курса тепĕр ыйтăва çĕклесшĕн. Ӳсен-тăрана хӳтĕлемелли им-çам хакĕ ӳссех пыни хумхантарать. Патшалăх тăкаксене саплаштарас ыйтăва темиçе те çĕкленĕ – уçăмлă хурав çук.

**Г.Н.ЯМУКОВ,**
**Вăрмар районĕнчи КФХ ертӳçи:**

– Çĕр улмипе ĕçлесси аттерен – Николай Тимофеевичран куçрĕ-тĕр. Çитмĕл саккăрта вăл. Аслисенчен вĕренсе хамăр та нумай çĕнĕлĕх кĕртетпĕр. Иртнĕ çулсенчи йăнăшсене тишкернĕ хыççăн лаптăка 180-200 гектартан ӳстерме кирлĕ мар тесе пĕтĕмлетрĕмĕр.

Тĕпрен илсен çур акине хатĕр эпир. Çунтармалли-сĕрмелли материал, удобрени çителĕклĕ. Чул хулапа Тюменьрен 200 тонна вăрлăх кӳрсе килнĕ. Беларуç сорчĕсем килĕшеççĕ, шăваракан лаптăкĕнче 300 центнер ытла тухать, типĕ çулсенче аптрасах кайман эпир.

**Вячеслав ГРИГОРЬЕВ**
**çырса илнĕ.**

## Фермер хуçалăхĕсем пулăшнă

Çĕрпӳ районĕнчи хресченсем кăçал мăйракаллă шултра выльăх йышне тата сăвăма ӳстерме çирĕп тĕллев лартнă. Иртнĕ çулхи кăтартусем çапла тума хистенĕ вĕсене. Ял хуçалăх предприятийĕсенче пĕлтĕр виçĕм çулхинчен 18,2 процент сахалрах сĕт сунă. Юрать фермерсем маттур пулнă. Вĕсен хуçалăхĕсенче сăвăм 69 процент ӳснĕ. Çулталăк вĕçлениччен Çĕрпӳсем пĕтĕмпе 19,36 пин тонна сĕт суса илме палăртнă.

## Пултаруллисене – хисеплĕ ятсем

Елчĕк районĕнчи "Победа" пĕрлешӳре пултаруллисене хисеплĕ ятсем параççĕ. Николай Логинов тракторист, Сергей Кирюхин оператор, Маргарита Курицына пăру пăхакан, Владимир Сергеев выльăх пăхакан, Анна Константинова доярка иртнĕ çулхи чи лайăх ĕçченсен шутне кĕнĕ. Çакă тата хастартарах пулма хавхалантарать. Ахальтен-им кунта пĕлтĕр кашни ĕнерен вăтамран 7085 килограмм сĕт сунă. Çак кăтартупа республикăра мала тухнă.

## Харпăрлăха илеççĕ

Шăмăршă районĕнче иртнĕ эрне тĕлне 14652,59 гектар çинчи ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕр пайĕсене саккун ыйтнă пек харпăрлăха илнĕ. Мĕн пур лаптăкăн 81 проценчĕн хуçи пур. Çĕр пайĕпе усă курас теменнисем (е çĕр пайне еткерлĕхе илекен тупăнмасан) ăна йышăнмасан та пултараççĕ. Вăл кирлĕ маррине палăртса 139 çын заявлени çырнă. Кун пек чухне çĕре вырăнти ял тăрăхĕ харпăрлăха илме пултарнине кура муниципалитета 2946 гектар куçнă.

## Ӳркенмесен, кар тăрсан

Пултаруллă çав Тăвай районĕнчи Нӳшкассипе Çĕнçырма ялĕсенче пурăнакансем. Çуркунне çул-йĕре шыв-шур илесрен хĕллех хатĕрленеççĕ. Акă Нӳшкассинчи урамсене çыхăнтаракан кĕперсем патĕнче çулсерен пăр катрамĕсем пухăнаççĕ, çавна май тимĕр-бетон пăрăхсен шăтăкĕсем питĕрĕнеççĕ. Çуркунне юр ирĕлнĕçемĕн шыв питĕ хăвăрт хăпарать, ейӳ вăхăтĕнче таврари çулсем те арканаççĕ. Пĕр канмалли кун Элпуç ял тăрăхĕн пуçлăхĕпе Василий Козловпа Сергей Матвеев, Василий Константинов, Николай Волков çырма хĕрне анса кĕперсене пăртан тасатнă. Ленин тата Гагарин урамĕсенче çуркунне хăрушлăх сиксе тухмалла мар. Шыв пăрăхĕсем шăнса ларасран вĕсене йывăç турачĕсемпе витнĕ, юрпа хуплана. Кĕперсене тăтăшах сăнаса тăраççĕ.

Çĕнçырмасем вара кăрлач уйăхĕнчи сивве пăхмасăрах Çамрăксен урамĕнчи пĕве çулне (çĕр купаласа тунăскере) юсама тухнă. Александрпа Евгений Соркинсем, Владимир Павлов, Владимир Порфирьев, Константин Федоров, Дмитрий Никитин тата ыттисем ăвăс пĕрененрен сăвайсем туса çул çапса тухнă, пăр çинче шăтăксем пăраланă. Çуркунне çитесле лайăх çанталăкра ял çыннисем çула малалла çирĕплетĕç, анлăлатĕç.

**ÇАНТАЛĂК**

| Шупашкарта | Вăхăт | 26.02 | 27.02 |
|---|---|---|---|
| Температура, °С | 2–4 сехетре | – 9 | – 11 |
| | 14–16 сехетре | – 2 | – 4 |
| Юр çăвать | | – | – |
| Атмосфера пусăмĕ, мм | | 766 | 763 |

Инçетри ял сасси

# Кĕрекаçра каçĕ лăпкă

**Красноармейски районĕнчи Кĕрекаç ял урамĕнчи чылай çурт ватлăхра пĕччен тăрса юлнă çын евĕр тăлăххăн ларать. Кăнтăрла тĕлне çитнĕрен кăна тĕл пулма тӳр килчĕ пулĕ кунта вăтăр саккăрти çамрăка. Хĕрĕх çула çывхаракан çынна çамрăк тени вырăнлă-ши? Ахăртнех, айвана хуратăр мана. Инçетри пĕчĕк ялсенче ватлăхпа çамрăклăха урăхларах уйăрăççĕ çав. Василий Яковлевран кĕçĕнрех ача шкулта кăна вĕренет-мĕн. Эппин, ял çамрăкĕ мар-и-ха вăл?**





Амăшĕ утмăл тăххăрта, почтăра тăрăшать, ялта хаçат-журнал салатать. Ватă çын кăмака çинче выртать, Елена Яковлева пек чупса çӳремест. Хаçат-журналне илме унăн Упири почтăна çитмелле, каялла таврăнмалла. Çуран утма ӳркенмест хĕрарăм, пур чухне те машина кĕтмест.

Колхоз бригадине ертсе пынă вăл хăй вăхăтĕнче. Халăхпа калаçма пултарнăран ăна старостăна суйланă. Ан тив, тепри çамрăкрах та пултăр, анчах çынпа калаçма, ăна ыр сунма, йăпатма пултараймасан мĕн усси.

Юрать Василий Яковлев унашкалли пулмарĕ. Тулли шыв бидонĕпе тĕл пултăмăр ăна урамра. Чим-ха, ăна куриччен ял варринче тепĕр арçын çăлран шыв ăсатчĕ. Пуплеме вăхăчĕ çукран килне васкарĕ, çавах та ăна курни пирĕншĕн телей пулчĕ. Пĕчĕк çеç ялта хаçатçăсемпе вăрах калаçма килĕшекен çамрăк арçынна тупха! Ниçта та кĕтмеççĕ. Тепĕр чух мĕнле те пулин çын тĕлне кăна лекес тесе шухăшласа утатăн. Василий Анатольевич та юлашкинчен: "Хальччен (пирĕнпе сăмахланă хушăра ĕнтĕ) çĕр ĕç тăваттăмччĕ", – терĕ. Шӳтлерĕ-ши е чăнласах калать, анчах унпа пуплеме пире кăмăллă пулчĕ.

**– Василий Анатольевич, кивĕ çуртпа юнашарах кирпĕчрен купаланăскерри ларать. Ялтах ĕçлесе пурăнатăр-и?**

– Ялта пурăнатăп, ĕçлеме Мускава çӳрекеленĕ. Малтан вырăнти ял хуçалăх предприятийĕнче тракториста вăй хунă, укçине те аван тӳлетчĕç. Юханчĕ "Янмурзино" хуçалăх, ирĕксĕрех инçете çул тытма тивет. Шăллăм та халĕ Мускавра.

**– Унтан укçасăрах таврăнмастăр пулĕ. Техникумра строителе вĕреннĕ терĕр те, ку професси çыннисем паян пит кирлĕ.**

– Мĕн вăл Мускав укçи? Нумай тӳлеменççĕ. Пĕрре кайса ĕçлесе килнипе киле çут çанталăк газĕ те кĕртеймĕн. "Кăвак çулăм" яла çитнĕ, пĕр вицĕ килте çунать пулас. Кирпĕч çурта вара эпĕ шкулта вĕреннĕ чухнех тунă.

**– Сирĕн çурт умĕнче туртăнмалли турник пур. Пĕчĕк çеç ялта кун пеккине курма сунманччĕ. Спортпа туслă апла эсир.**

– Туслă. Хамăр çинчен шухăшламалла, сывлăхшăн тăрăшмалла. Турник çинче туртăннисĕр пуçне штанга çĕклетĕп. Ман çулти темиçе арçын пур ялта. Пĕрле пуçтарăнса, калăпăр, футболла выляма май килмест. Пĕри инçетрен ĕçлесе килнĕ çĕре тепри тухса каять.

**– Спортпа тусли аван. Çемьесĕр çамрăксене сăра-эрех пĕтерет-çке. Инçетрен таврăнсан ĕçлесе илнĕ укçан çуррине ĕçсе яраççĕ.**

– Пирĕн ялта ытлашши иртĕхмеççĕ. Тепĕр тесен, ĕçме çынни те çук. Пĕччен интереслĕ мар. Лăпкă пурăнатпăр.

**– Сирĕнтен аялларах хаклă йышши техника урам варринчех. Уйрăм çыннăн пулас çук, хуçалăххăн ĕнтĕ вăл. Ăна никам та тивмест-и?**

– Вăрлас-çаратасран пирĕн ялта упранать те. Хĕл тăршшĕпех ларать.

**– Чăлăш-чалăш пӳртсенче вуçех те пурăнмаççĕ пулĕ. Вĕсене сутакансем чылайăн-и?**

– Ун пеккисем çук. Хуçисем пурăнмаççĕ, анчах вĕсен пахчисемпе тăванĕсем усă кураççĕ. Мунчисем чаплă. Хальхи строительство материалĕнчен тунисем те пур. Евромунча темелле ĕнтĕ.

**– Мĕншĕн-ха çурчĕсене çĕнетмеççĕ?**

– Çурт кивĕ пулсан та ларать. Пахчари тусанлă ĕç хыççăн мунча пит кирлĕ, ăна тумаллах.

**– Мĕнпе илĕртет сире, ĕçкĕпе иртĕхмен вăй питти арçынна, çак пĕчĕк ял? Клуба çӳрейместĕн, хĕрпе паллашаймастăн, лавккана тухаймастăн, шыва çăлран йăтмалла...**

– Ялта пурăнма лайăх-çке. Выльăх тытсан кирли йăлтах пулĕ: сĕт, çу, аш. Клуба ытти яла çӳреме пулать. Эрнере пĕрре райпо автолавккапа килет. Шыв çĕклени – ӳтпĕве хускатни. Çăла юсамалла, йывăç пурине улăштармалла. Кивелсе çитнĕ. Улăштарма тимĕр-бетон ункă чылай кирлĕ. Çăлĕ тарăн, 20 метр ытла та пулĕ. Майрасем чăнах та çук ĕнтĕ, пенси карчăкĕсем çеç. Вĕсем те шăнкăрчсем пек кĕркунне вĕçсе каяççĕ те çуркунне таврăнаççĕ. Ачисем патĕнче хĕл каçаççĕ.

**– Авланса çемье çавăрас шухăш çук-и?**

– Мĕнле хĕр килĕштĕр кунта килме?

**– Пурăнма лайăх терĕр вĕт.**

– Ĕç çукки пĕтерет. Авланма шухăш пур. Çăва тухар – куç курĕ.

Кĕрекаç ялĕнче çирĕме яхăн кил хуçалăхĕ, çулталăкĕпех пурăнакансене пӳрне хуçса шутлама пулать. Вырăнти ял тăрăхĕн пуçлăхĕ çулсерен вĕсен умĕнче отчет тăвать, пурнăçланă ĕçпе паллаштарать. Пухăвĕ Кĕрекаçра мар, Упире иртет. Сакăр ял çыннине пуçтарса транспортпа илсе килеççĕ. Администраци специалисчĕ пĕлтернĕ тăрăх – Кĕрекаçа лавкка илсе пымалла тунă, пĕр çăл юсанă. Кăçал,тен, тепĕр çăлне йĕркене кĕртĕç. Василий Яковлев та, тен, авланĕ, çемье çавăрĕ, мăшăрĕ юлма килĕшсен ял пурнăçне кăшт та пулин тăсĕ.

**Ирина НИКИТИНА.**

**Валентина ПЕТРОВА сăн ӳкерчĕкĕсем.**

ЫР КĂМĂЛЛĂХ

# Тенкĕ çумне тенкĕ

Тăвай районĕнче пурăнакансем «Ачалăх ячĕпе, ачалăхшăн» ыр кăмăллăх марафонĕн фондне çулсеренех хастар хутшăнаççĕ. 2011 çулта вĕсем 116895 тенкĕ пухнă, 2012 çулта – 169315 тенкĕ. Вĕсенчен 97320-ĕшне ача сачĕсене пурлăхпа техника енчен аталантарма, 71995-ĕшне нумай ачаллă, тулли мар, сахал тупăшлă çемьесене, сусăр ачасене пулăшма янă. Тăвайсем пĕлтĕр марафон фондне 192078 тенкĕпе пуянлатнă. Ку укçапа та тĕллевлĕн усă курнă.

Сăвапла ĕçе кăçал та кăмăллăн хутшăнаççĕ вĕсем. Район администрацийĕ çак кунсенче марафон счечĕ çине 10700 тенкĕ, вĕренӳ пайĕ – 3000, Енĕш Нăрвашри вăтам шкул – 2600, Тăвайĕнчи 45-мĕш пушар часĕ 2000 тенкĕ укçа куçарнă. Пĕтĕмĕшле вара 20 пин тенке яхăн пухăннă. Çакă пуçламăшĕ кăна-ха.



Ытти район та ача-пăчана ырă тума васкать. Акă Патăрьелсем – 26600, Вăрнарсем – 97555, Йĕпреçсем – 33550, Шăмăршăсем 25000 тенкĕ пуçтарнă. Марафон уçăлнăранпа вара пĕр уйăх та çитмен. Тенкĕ çумне тенкĕ хушăнса ыр кăмăллăх марафонĕн пухмачĕ самаях пуянланать. Унта предприяти-организаци çеç мар, уйрăм çынсем те, бизнес представителĕсем те хăйсен тӳпине хывма пултараççĕ.

Сăвапла акцие хутшăнма кăмăллакансен «Раççей ача-пăча фончĕн» регион уйрăмне (Шупашкар хули, Петров урамĕ, 7-мĕш çурт) пымалла е (8352) 62-89-42 телефонпа шăнкăравламалла. Укçана марафон счечĕ çине куçарма юрать. Унăн реквизичĕсем:

ЧРО ООБФ «Российский детский фонд»
ИНН 2128005408/КПП213001001
Р/с 40703810075220160067 в Чувашском ОСБ[1] 8613
г.Чебоксары
БИК 049706609, кор/с
30101810300000000609

Пухмача СМС ярса та пуянлатма пулать.

**Валентина МАКСИМОВА.**

ЯТ-СУМ



# Хисеплĕ ватă

Зоя Егорова (Иванова) 1933 çулта Канаш районĕнчи Пайкилт ялĕнче çуралса ӳснĕ. Ачалăхĕ çăмăл пулман унăн: çулталăкрах амăшĕнчен тăлăха юлнă, ашшĕ 1942 çулта вăрçăра вилнĕ. Аппăшĕпе Ольгăн чылай хура-шур курма тивнĕ, вăрçă çулĕсенчи тата вăрçă хыççăнхи выçлăха чăтса ирттернĕ вĕсем. Уй-хирте, фермăра ачаранах аслисемпе тан ĕçленĕ. Çĕнĕ Мамири пуçламăш шкулта тăватă класс пĕтернĕ хыççăн кил хуçалăхне хăй тĕллĕн йĕркелесе пыма тытăннă, асламăшĕпе аслашшĕне те пулăшса тăнă. Каярахпа Зоя Ивановна Мускава стройкăна вербовкăпа кайнă. Кунта та хастарлăхĕпе палăрнă чăваш хĕрĕ. Пултарулăхне кура ăна стройтрест Хисеп хучĕсемпе чысланă.

Çĕр-шывăн тĕп хулинче çемьеленнĕ хыççăн тăван тăрăха куçса килнĕ. Пĕр вăхăт Çеçпĕл ячĕллĕ колхозра вăй хунă Зоя, кайран Шăхасана пурăнма куçнă вĕсем.

Зоя Ивановна нумай çул вăрман промышленноç хуçалăхĕнче станочникра ĕçленĕ, общество ĕçне те хастар хутшăннă. Тивĕçлĕ награда чылай унăн. Ара, ĕç стажĕ те 45 çул.

Зоя Егорова халĕ тивĕçлĕ канура. Пĕлтĕр вăл 80 çулхи юбилейне палăртрĕ. Апла пулин те кĕрĕк арки йăваласа лармасть кинемей: çăвĕпех пахчара ĕçлет, алса-чăлха çыхать. Вăл виçĕ ача çуратса ӳстернĕ, пурте çемьеллĕ, ĕçлĕ. Володьăпа Люба – Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕсем. Аслă ывăлĕ Слава район тĕп больницинче вăтăр çул ытла водительте вăй хурать. Зоя Ивановнăн тăватă мăнук тата пилĕк кĕçĕн мăнук. Хăйĕн ачисемшĕн çеç мар, ял çыннишĕн те тĕслĕх вырăнĕнче вăл. Ĕçчен, сăпайлă, ырă кăмăллă пулнишĕн юратаççĕ ăна.

**Ольга НИКОЛАЕВА.**

**Канаш районĕ, Шăхасан ялĕ.**

# Иван Яковлев парни

**Тăвай районĕнчи Енĕш Нăрвашри историпе асăну музейне 1990 çулта уçнă. Вăл маларах шкул çурчĕ пулнă. Ăна халăхăмăра çутта кăларакан Иван Яковлев тăрăшнипе лартнă. Аслă вĕрентекенĕмĕр 1879 çулхи юпа уйăхĕн 12-мĕшĕнче пĕрремĕш хут асăннă яла килнĕ. Ял халăхĕпе курнăçса калаçнă, шкул уçма палăртнă. Пĕлÿ çуртне 1903 çулта хута янă. Унтанпа 110 çул иртнĕ пулсан та çурт чиперех сыхланса юлнă. Енĕш Нăрвашсем ăна чыслăн упраççĕ.**

### Шанчăкла алăра

Иван Яковлевич çак яла вун икĕ хутчен килсе кайнă, пĕтĕм яваплăха хăй çине илнĕ: шкул валли çĕр уйăрассине, чул кăларассине, укçа пухассине, йывăç турттарса килессине тата ыттине те. Каярахпа экзаменсем ирттерме те килнĕ. Чи лайăх вĕренекенсене хăй патне Чĕмпĕре илсе кайнă. Вĕсенчен пĕри – Степан Максимов композитор.

Çакна та асăнса хăвармалла: шкул çуртне вырăс çыннисем тунă. Тăррине витме ялти ăстасене шаннă. Анчах лешсем хĕç тимĕрпе ĕçлесе курман, кĕрхи йĕпе-сапа та чăрмантарнă. Çавна май вĕсем ĕçе пăрахнă. Кун пирки Иван Яковлевич пĕлнĕ. 1903 çулхи çуркунне вăл шкул çурчĕн тăррине витме Чĕмпĕртен ăстасем янă. Аслă вĕрентекенĕмĕр парнисем те упранаççĕ музейра: юман сĕтел, доска, шкаф, этажерка.






Хăнасем кунта тĕрлĕ çĕртен килеççĕ. Унсăр пуçне конференцисем, семинарсем ирттереççĕ, тĕпчев ĕçĕсем йĕркелеççĕ.

Хальхи вăхăтра музей ертÿçи – Владимир Петров. Маларах вăл вĕрентекенре, шкул директорĕнче ĕçленĕ. Ун пирки музей пуçаруçи тесен те йăнăш мар. Шăпах вăл тăрăшнипе пĕрчĕн-пĕрчĕн экспонат пуçтарăннă, аса илÿ йĕрки çырăннă. «Кунта ĕçлеме чун туртăмĕ кирлĕ, – тет Владимир Васильевич. – Алăка уçса хупнипех ĕç малалла каяймĕ. Пурне те хам тăватăп: урай çăватăп, юсав ĕçĕсене пурнăçлатăп. Тепĕр чухне çемйипех вăй хуратпăр». Хальхи вăхăтра çакнашкал музейсене тытса тăма çăмăл мар. «Патшалăх укçа-тенкĕпе пулăшкалать-и?» – кăсăклантăм эпĕ. «Смета туса хатĕрленĕччĕ, анчах укçа-тенкĕ хĕсĕкрен культура министерстви пулăшаймасть», – пулчĕ хурав.





Юрать-ха тилхепене тăрăшуллă çын тытса пырать. Чылай çул учительте ĕçленĕрен вĕренекенсем те спонсор пулса пулăшаççĕ ăна. Сăмахран, пĕри сăрăпа тивĕçтернĕ. Петровсем вара вунă кун çемйипех музей çуртне сăрланă.

### Кашни экспонат хаклă

Енĕш Нăрвашра тĕнчипе, çĕр-шывĕпе паллă çын чылай çуралса ÿснĕ. Вĕсемпе кунта паллашма май пур. Çакă та ахальтен мар пулас. Иван Яковлев уçнă шкулăн пĕлтерĕшĕ самаях пысăк.

Музейра Моисей Спиридоновпа Никита Сверчков ÿнерçĕсен ĕçĕсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Пултаруллă икĕ çыннăн ашшĕсем пĕр тăван пулнă. Вĕсене хăй вăхăтĕнче Чĕмпĕрте ăс пухнă Василий Тимофеев ÿкерме вĕрентнĕ. Моисей Спиридоновичăн шăллĕ Виктор – чăвашсен пĕрремĕш скульпторĕ. Йăмăкĕ Ольга та хăйне евĕр пултаруллăскер пулнă. Вăл турăшсем ÿкернĕ, чиркÿсем илемлетнĕ. Моисей Спиридоновăн ывăлĕ Виктор та ашшĕ çулĕпех кайнă. Шел, Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче пуçне хунă. Хĕрĕ Августа – Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ. Пĕр йăхра миçе ÿнерçĕ?! Пултарулăх юнпа куçать тени тĕрĕсех.

Павел Меркурьев ÿнерçĕпе Алексей Майраслов скульптор та çак ялтах тĕнчене килнĕ. Вĕсен ĕçĕсем те чылай. Павел Меркурьевич Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçине хутшăннă. Çапăçу хирĕнчех ÿкерчĕксен эскизне хатĕрленĕ вăл. Мирлĕ вăхăтра вĕсене шур хут çине куçарнă. Ахальтен мар унăн чылай ÿкерчĕкĕнче вăрçă теми сăнланнă. СССР халăх артисткине Вера Кузьминана пĕлмен çын та çук пулĕ. Вера Кузьминична та кунтанах.

Музейра сакăр зал. Вĕсенчен чи «çамрăкки» – çĕр-шыв хÿтĕлевçисене халалланăскер. «Шкулта пĕр кĕтес уçас шухăш çуралнăччĕ. Каярахпа, кунта ĕçлеме тытăнсан, ĕмĕтĕме пурнăçа кĕртрĕм. Халĕ экспонатсем хушăнсах пыраççĕ. Афган вăрçинче пирĕн ялтан 21 çамрăк пулчĕ, Чечняра – 13-ĕн. Пурте сывах таврăнчĕç. Ытти салтак та час-часах кĕрсе курать ку пÿлĕме, тав тăвать», – кăмăллăн калаçать Владимир Васильевич. Вăл ачасене чылай çул çар ĕçне вĕрентнĕрен çак зала йĕркелес шухăш канăç паман ăна. Çитменнине хăй те çĕр-шыв умĕнче салтак тивĕçне пурнăçланă. Салтак юррине пухса ятарлă альбом хатĕрленĕ.

Вăрçă вăхăтĕнче «Красная Чувашия» колхоз çар самолечĕ тума 300 пин тенкĕ укçа, Хĕрлĕ çар фондне 500 пăт тырă хывнă. Ял халăхне Иосиф Сталин Тав çырăвĕпе чысланă.

Вăрçа хутшăннисене халалласа ятарлă пÿлĕм йĕркеленĕ. Вут-çулăм хирне Енĕш Нăрвашран 603 çын тухса кайнă, вĕсенчен 245-ĕшĕ ĕмĕрлĕхех унта выртса юлнă. Паянхи кун вăрçăран сывă таврăннисенчен тăваттăшĕ çеç пурăнать.

Колхоз, ял историйĕн пÿлĕмĕсем те материалсемпе, экспонатсемпе пуян. Кунтах – авалхи ĕç хатĕрĕсем, савăт-сапа, чĕр чун кÿлепин пайĕсем...

1939 çулта пушар вăхăтĕнче ялта 114 кил çуннă. Инкек хыççăн халăх пушар сÿнтермелли хатĕрсем пухма тытăннă, вĕсене ал айĕнчех тытнă. Урамсенче хуралсем йĕркеленĕ. «Шел, ку йăла халĕ каллех çухалчĕ», – терĕ Владимир Петров пăшăрханарах.

Иртнĕ çул Енĕш Нăрваш 450 çул тултарнă. Вăл çулран çул аталанса пынине кăтартнă музейра. Кунта сăнланнă кашни самант пĕлтерĕшлĕ, кашни çын пурнăçĕ кăсăклă.

**Валентина ПЕТРОВА.**
**Автор сăн ÿкерчĕкĕсем.**

# Лаша пек вăй хурасчĕ

Кĕçĕн Шетмĕри «Романтика» халăх театрĕ сцена çинче Анатолий Чебановăн «Укăлча умĕнче» камитне кăтартать. Спектакльти тĕп рольсенчен пĕрне Валентина Петрова (сăн ÿкерчĕкре) вылять. Куракана тытăна илмелле калăплать вăл хăй сăнарне.

Красноармейски вăрманĕ çывăхĕнче хĕрÿ тупăшу пырать. Районти паллă спортсменсемпе пĕрлех Кĕçĕн Шетмĕсем те тупăшаççĕ. Вĕсене хавхалантаракансен йышĕнче каллех Валентина Ильиничнăна куратăн.

Кăçалхи çула çĕр-шывра Культура çулталăкĕ тесе палăртнишĕн çав тери хĕпĕртенĕ вăл. «Лаша çулĕнче культурăшăн лаша пек вăй хурсан тем пекехчĕ», – тет хастар хĕрарăм. Шÿтлесе мар, чăнласах. Хăй те лашапа питĕ туслă. Ăна юратасси ашшĕнчен, Илья Терентьевран, куçнă пулмалла.

Ку тĕслĕхсене Валентина Петровăн кулленхи пурнăçĕнчен илтĕм. Кашнинчех тĕрлĕ çĕнĕлĕхпе палăрать вăл. Тĕрĕссипе, культура ĕçченĕн çапла пулмалла та.

Унпа пĕрре мар тĕл пулса калаçнă, пултарулăхĕ тĕпсĕр çăл куçран тан тапса тăнăн туйăнать. Юрра-кĕвве вăл ачаллах чун-чĕре хĕлĕхĕсем витĕр кăларнă. Кăмăлĕпе те çĕкленÿллĕ те хаваслă. Кулăш-шÿтрен те аякра тăмасть. Унсăр пуçне культура çыннине халăхпа ĕçлеме пĕлни те кирлех çав.

1984 çулта Çĕрпÿри культурăпа çут ĕç училищинчен вĕренсе тухнă хыççăн Валентина Ильиничнăна Кĕçĕн Шетмĕри культура çурчĕн илемлĕх ертÿçин ĕçне шанса панă. Тепĕр вунă çултан директорăн тилхепине тыттарнă. Пĕрле ĕçлекенсен чун-чĕрине вăй-хăват кĕртме пултарнă вăл. Ÿсĕм çулĕ çине тăнăран ял-йыш та ытларах хисеплеме тытăннă ăна. Çакă вара ăна татах хавхалантарнă, ĕçе кал-кал йĕркелеме май панă.

Валентина Петрова тăрăшнипех культура учрежденийĕнче тĕрлĕ кружок, ятарлă клуб ĕçлеççĕ. Унта аслисем те, çамрăк ăру та çÿрет. Ялти артистсем хăйсен пултарулăхне пуянлатса район, республика конкурсĕсемпе фестивалĕсен лауреачĕсем пулса тăнă. Çитĕнĕвĕсене шута илсе 2005 çулта Валентина Ильиничнăна «Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» ят панă.



Вăл пуçарнипе клубра кану каçĕсемпе уявсем, тĕл пулусем иртеççĕ. Юлашки вăхăтра сумлă юбилейсене халăхпа пĕрле уявласси те, куракансене спектакльпе савăнтарасси те йăлана кĕнĕ.

Центрта юсав ĕçĕсем ирттернĕ хыççăн таса, çутă, ăшă. Унăн чÿречисем тепĕр чухне çур çĕр иртсен çеç сÿнеççĕ. Концерт-спектакль хыççăн куракансем килĕсене саланас умĕн вара Валентина Петровăна тав тăваççĕ. Çакă культура ĕçченĕшĕн çав тери пĕлтерĕшлĕ.

**Виктор ДАНИЛОВ.**
**Красноармейски районĕ.**

# Хула ҫулӗсенче хурлӑх курас мар

Республикӑри автомашинӑсен пысӑк пайӗ Шупашкар хулинче чупать. Ҫавӑнпа кунти ҫулсем ҫинчи лару-тӑру калаҫтарать, сӳтсе явма хистет. Ҫакна шута илсе иртнӗ эрнере яваплӑ пуҫлӑхсем журналистсемпе тӗл пулу йӗркеленӗ. Ыйтусене ҫул ҫинчи хӑрушсӑрлӑх инспекцийӗн Шупашкар хулипе ӗҫлекен пай пуҫлӑхӗн ҫумӗ, полици подполковникӗ Сергей Субботкин хуравланӑ.

Пӗлтӗр Шупашкарта 842 аварире 36 ҫын пурнӑҫӗ татӑлнӑ, 975-ӗшӗ аманнӑ. 2014 ҫул пуҫланнӑ кӑна, анчах кӗске тапхӑрта хулари ҫулсем ҫинче 94 инкеке шута илнӗ. Вӗсенче икӗ ҫын вилнӗ, 109-ӑшӗ суранланнӑ.

Иртнӗ ҫул такси водителӗсен айӑпӗпе 37 инкек пулнӑ. Кӑҫал вӗсен шутне чакарас тӗллевпе нарӑс уйӑхӗнче ятарлӑ икӗ рейд ("Суя таксист") ирттернӗ. Юлашки икӗ уйӑхра таксистсем ултӑ инкек тунӑ. Пӗлтӗр ҫынсене ятарлӑ ирӗк илмесӗр турттарнӑшӑн 13 водителе явап тыттарнӑ тата ытти те.

Ҫул ҫинчи инкексенче нумай ача аманать. Хулари инспекторсем иртнӗ ҫул шкулта вӗренекенсемпе, ача садне ҫӳрекенсемпе 600 хут ытла тӗл пулса калаҫнӑ, ҫул ҫинче кашнин хӑйне мӗнле тытмаллине ӑнлантарнӑ. Тӗллевлӗ рейдсем, конкурссем, проектсем кӑҫал та иртӗҫ.



## Кулянмасӑр кун иртмест

**Ҫул-йӗр ҫинчи инкексен шучӗ кунсерен ӳссе пыни никамшӑн та вӑрттӑнлӑх мар. Каланине иртнӗ эрнери тӗслӗхсем те ҫирӗплетеҫҫӗ.**

**Тунти кун,** нарӑсӑн 17-мӗшӗнче, республикӑри ҫулсем ҫинче ҫичӗ инкек пулнӑ, вӗсенче вун пӗр ҫын аманнӑ.

Акӑ Шупашкарта каҫхи тӑватӑ сехет тӗлнелле Ленинла комсомолӗпе Хусанкай урамӗсем хӗресленнӗ вырӑнтан 42 ҫулти водитель ҫӑмӑл машинипе тӗп ҫул ҫине пӑрӑнса тухнӑ. Ҫак вӑхӑтра тӗп ҫулпа пынӑ транспорта ирттерсе яманран вӑл ун ҫине пырса кӗнӗ. Инкекре виҫӗ ҫын, ҫав шутра тӑватӑ ҫулхи ача, аманнӑ.

**Ытлари кун** республикӑра пӗр аварие шута илнӗ, пӗр ҫын сусӑрланнӑ.

Шупашкарти Павлов мичман урамӗнчи 31-мӗш ҫурта хирӗҫ 44 ҫулти водитель "Форд" машинипе малта пыракан транспорт хыҫҫӑн ҫывӑх пынипе машинӑпа ҫапӑннӑ. Ҫакна пула "Фордра" ларса пынӑ вун тӑххӑрти хӗрӗн аманнӑран медицина пулӑшӑвӗ илме тивнӗ.

**Юн кун** ҫулсем ҫинчи ултӑ инкекре пӗр ҫын пурнӑҫӗ татӑлнӑ, пиллӗкӗн аманнӑ.

Ирхине 7 сехет те 40 минутра Шупашкар-Сӑр автоҫул ҫинче, Улатӑр районӗнче, 26 ҫулти хӗр ҫӑмӑл машинипе хирӗҫ килекен "ВАЗ-21214" машинӑпа ҫапӑннӑ. "ВАЗ-21099" автомашина рульне итлеттерейӗмен хӗр, Улатӑр больницин реанимаци уйрӑмне лекнӗ.

**Кӗҫнерни кунхи** икӗ инкекре икӗ ҫын сусӑрланнӑ.

"Шӑхасан-Калинино" ҫул ҫинче, Канаш районӗнче, 14 сехетре ҫирӗм тӑваттӑри водитель хирӗҫ ҫул ҫине тухнӑ, "Тойота" машина ҫине пырса кӗнӗ. Аманнӑскере ҫывӑхри больницӑна ӑсатнӑ.

**Эрне кун** республикӑри ҫулсем ҫинче ултӑ инкек пулнӑ, вӗсенче ултӑ ҫын аманнӑ.

Ирхи 10 сехет тӗлӗнче Шупашкарти Эгер бульварӗнче ҫирӗм ҫиччӗри водитель "Лада-Гранта" автомашинипе хӑйӗн умӗнчи транспорта тӑрӑнтарнӑ. Ҫакна пула "ВАЗ-2108" машина сулӑм вӑйӗпе малалла куҫса ҫул урлӑ каҫакан ҫын ҫине пырса кӗнӗ. Утмӑл ултӑ ҫулти пенсионер аманнӑ, ӑна больницӑна илсе ҫитернӗ.

**Шӑмат кунхи** инкекре пӗр ҫын аманнӑ.

9 сехет иртсен Шупашкарти Мир проспекчӗнче ятарлӑ вырӑнта ҫул урлӑ каҫакан 17 ҫулти каччӑ инкеке лекнӗ. Ун ҫине 33 ҫулти водитель машинипе пырса кӗнӗ. Шар курнӑ ҫамрӑка больницӑна ӑсатнӑ.

**Вырсарни кун** икӗ аварие шута илнӗ, вӗсенче икӗ ҫын сусӑрланнӑ.

Каҫхине, 9 сехет тӗлнелле, Шупашкар районӗнче ("Атӑл" М-7 автоҫулӑн 656-мӗш ҫухрӑмӗнче) 21 ҫулти водитель автомашинипе юнашар пынӑ машинӑпа ҫапӑннӑ. Аманнӑскере ҫывӑхри больницӑна ӑсатнӑ.

Кӑларӑма
Ирина НИКИТИНА хатӗрленӗ.

# Ӳсӗрпе инкек пӗр тӑван

**Автомашина рулӗ умне ӳсӗрле ларни ырри патне илсе ҫитерменнине пӗлмен ҫын ҫук та пулӗ. Анчах правасӑр юласса е пысӑк штраф тӳлессе пӗлсе тӑрсах ҫула тухатпӑр, инкек ҫине синкек тӑватпӑр. Иртнӗ ҫулхи авӑн уйӑхӗнчен ҫӗр-шывра саккуна татах хытарчӗҫ: ӳсӗр водителӗн правине туртса илнисӗр пуҫне 50 пин тенкӗ таран штраф хума йышӑнчӗҫ. Ҫакӑн хыҫҫӑн тата ӳсӗрле руль умне ларнӑшӑн 10-15 талӑка хупма пултараҫҫӗ. Анчах хӑшӗ-пӗри ҫавах хӑнк та тумасть.**

Нарӑс уйӑхӗн 21–23-мӗшӗсенче республикӑра "Ӳсӗр водитель" ятпа профилактика операцийӗ иртнӗ. Виҫӗ кун хушшинче полици ӗҫченӗсем 72 ӳсӗр водителе тытса чарнӑ, 31-ӗшӗ хӑйсем ӳсӗррине пытарма тӑрӑшнӑ, медицина учрежденине кайма килӗшмен. Ҫакӑ ҫӑлӑнӑҫ ышрани мар ӗнтӗ. Кун пек тӗрӗслеврен пӑрӑннӑшӑн та правасӑр тӑрса юлӑн тата 30 пин тенкӗ таран штраф тӳлӗн. Саккун ҫапла ыйтать мар-и?

Кӑшт сӑра-эрех сыпнипех ӳсӗр пулас ҫук тесе шухӑшлать, тен, чылайӑшӗ. Кун пеккисене ҫакна аса илтерни вырӑнлӑ. Сывласа кӑларакан пӗр литр сывлӑшра этил спирчӗ 0,16 миллиграмм е ытларах пулсан Раҫҫейри водителе урӑ теейместӗн.

Америкӑра, Европӑри ҫӗр-шывсенче те водительсене пӗрер е икӗ черкке ҫырла эрехӗ ӗҫме ирӗк панӑ. Урӑхла каласан, юнри спирт виҫин чиккине палӑртнӑ: пӗр вырӑнта – 0,8 промилле таран ( Англире, Америкӑра), тепӗр ҫӗрте – 0,05 (Тайланд), 0,08 промилле (Сингапур). Анчах ытлашши ӗҫсен вӗсене ҫав тери пысӑк штраф тӳлеттереҫҫӗ. Францире мӗн тӗрлӗ чаплӑ эрех туса хатӗрлемеҫҫӗ пулӗ. Анчах та кунта ҫырла эрехне пӗр черкке (0,8 промиллене ҫитиччен) ытла ӗҫсе руль умне ларсан повесткӑпа суда чӗнеҫҫӗ тата 135 евро штраф тӳлеттереҫҫӗ. Юнри спирт виҫи 0,8 промиллерен иртсен штраф 4500 европа танлашать. Ӳсӗрле инкек тусан 30 пин еврона ҫитет. Инкекре ҫын вилсен водительрен 150 пин евро шыраса илеҫҫӗ тата 10 ҫуллӑха тӗрмене лартаҫҫӗ. Францире автомобильпе ҫӳрес тесен юнри алкоголь виҫине тӗрӗслемелли хатӗр ҫумра пулмалла. Ҫапла тӑваҫҫӗ те ку ҫӗр-шыври автомобилистсем. Ресторантан тухсан машинӑна лариччен вӗсен хайхи хатӗрпе тӗрӗсленмелле. Хатӗрӗ ҫумра пулмасан штраф хураҫҫӗ.

Англире руль умне ӳсӗрле ларнӑшӑн кӑна 7200 евро тӳлеттереҫҫӗ.

Раҫҫейпе кӳршӗри Беларуҫре юнри спирт виҫи 0,04 промиллерен иртсен водитель пӗрремӗш хут 12 500 доллар штраф тӳлет, виҫӗ ҫуллӑха машина прависӗр юлать. Инкек кӑтартсан тӗрмене те лекет.

Тайландра ӳсӗр водителе пула ҫын вилсен айӑплине персе вӗлереҫҫӗ.

Сингапурта ӳсӗр водителе патаклама пултараҫҫӗ. Ҫапмалли патак тӑршшӗ – метр ытла, хулӑнӑшӗ – сантиметра яхӑн. Патакланнипе пӗрле штраф та илеҫҫӗ.

Китай саккунӗпе руль умне эрех пач ӗҫмесӗр лармалла. Водителе ӳсӗрле тытсан уголовлӑ майпа айӑплаҫҫӗ – пӗр уйӑхран пуҫласа ултӑ уйӑх таран. Кунсӑр пуҫне виҫӗ ҫул машинӑпа ҫӳреймӗн. Ӳсӗрле инкек тусан вилӗм кӗтет.

Чехире, Венгрире, Словакире, Румынире те автомашинӑпа урӑ пуҫпа кӑна ҫӳремелле, саккун пӗр тумлам ӗҫме те ирӗк памасть.

Араб Эмирачӗсенче ҫӗр-шывӗсенче "ӳсӗр водитель" текен ӑнлав та ҫук. Унта эрех ӗҫниех преступлени шутланать. Ислам тӗнне ӗненекенсен сӑра-эрех патне пыма юрамасть.



## Ҫӑмӑлли те ҫӑмӑлттайлӑха каҫармасть

Мотоцикл автомашина мар, пӗчӗкскер те ҫӑмӑлскер инкек кӑтартмӗ тенӗ пулас Шупашкарта пурӑнакан утмӑл ҫулти арҫын. Унӑн рулӗ умне вӑл ӳсӗрле ларнӑ (2012 ҫулти ҫурла уйӑхӗн 11-мӗшӗнче). Ку ҫеҫ-и? "Урал М-67-36" мотоциклӗ ҫине икӗ ҫынна лартнӑ. Ҫакнашкал ҫӑмӑлттайланни ырри патне илсе ҫитермен. "Шупашкар-Сурски" автоҫул ҫинче ҫӑмӑл автомашинӑпа ҫапӑннӑ. Икӗ пассажиртан пӗри вырӑнтах вилнӗ, тепри чӗрӗ юлнӑ пулин те хытӑ сусӑрланнӑ, каярах инвалида тухнӑ.

Инкек тунӑ арҫын айӑпне йышӑнман. Мотоцикл рулӗ умне ӳсӗрле мар, урӑлла ларнине ӗнентересшӗн пулнӑ. Ҫакна кура уголовлӑ ӗҫе тӗрлӗ енлӗ тӗпчеме тивнӗ. Красноармейски район сучӗ вӗсене тӗпе хурса арҫын айӑплине палӑртнӑ, виҫӗ ҫуллӑха колони-поселение яма йышӑннӑ. Икӗ ҫул вӑл нимӗнле транспорт рулӗ умне те лараймӗ.

## Суяпа мала каяйман

Автомашина урӑ мар водитель аллинче пулнине ҫул-йӗр инспекторӗсем тӳрех асӑрханӑ (кӑҫалхи нарӑсӑн 16-мӗшӗнчи каҫ). Хыҫран хӑвалама тытӑннӑ. Ҫакна курсан лешӗ машинине пӑрахсах тарнӑ. Ҫул ҫинчи транспорта инспекторсем кирлӗ ҫӗре илсе кайнӑ. Тӑватӑ кустӑрмаллӑ тусне пӗччен хӑварнӑ арҫын та вӑхӑта ахаль ирттермен, машинине вӑрласа кайнӑ тесе полицие шӑнкӑравланӑ.

Ҫапла туса Улатӑр ҫынни мала каяйман. Халӗ унӑн руль умне ӳсӗрле ларнӑшӑн явап тытма тивет. Ҫав хушӑрах полицие суйнӑшӑн та суд тенкелӗ ҫине лекме пултарать. Уголовлӑ ӗҫ пуҫарасси пирки ыйту тӑратнӑ ӗнтӗ.



## Вӑтӑр хут ытларах тӑкакланӗ

Елчӗкре пурӑнакан йӗкӗте Канаш районӗнче ҫул-йӗр инспекторӗсем тытса чарнӑ (иртнӗ ҫулхи раштавӑн 5-мӗшӗнче). Вӑл "ВАЗ-2112" автомашина йӗркене пӑсса хирӗҫ килекен транспорт ҫулӗ ҫине тухнӑ. Саккунпа килӗшӳллӗн ҫакӑншӑн пилӗк пин тенкӗлӗх штраф хумалла е водителе 4 уйӑхран пуҫласа 6 уйӑхчен машина прависӗр хӑвармалла. Анчах ҫамрӑк ҫул-йӗр инспекторне хӑй йӗркене пӑсни ҫинчен протокол ҫыртарасшӑн пулман, укҫа тӗкнӗ. Лешӗ илмен.

Уголовлӑ ӗҫе Канаш район сучӗ пӑхса тухнӑ, 21 ҫулти арҫын айӑплӑ тесе йышӑннӑ. Халӗ ҫамрӑкӑн укҫа кӗсйи самаях ҫӳхелӗ, унӑн 30 пин тенкӗ штраф тӳлемелле. Ку вӑл инспектора сӗннӗ сӗтев виҫинчен вӑтӑр хут пысӑкрах. Суд йышӑнӑвӗ вӑя кӗмен-ха.

Нумаях пулмасть Канаш районӗнче ҫул-йӗр йӗркине пӑхӑнман тепӗр водителе тытса чарнӑ. Вӑл та протокол ан ҫыртӑр тесе инспектора укҫа пама хӑтланнӑ. Ҫакӑншӑн Шупашкар ҫынни пирки уголовлӑ ӗҫ пуҫарнӑ. Темӗн пек ӳкӗнет пулӗ халӗ ҫакӑншӑн, анчах чавса ҫывӑх та ҫыртма ҫук.

# Çĕньял



Патăрьел районĕнчи Çĕньял маларах Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи Пăва уесĕнчи Турхан вулăсне кĕнĕ. Чăваш Енре Çĕньял – 10. Анчах вĕсене вырăсла тĕрлĕрен куçараççĕ. Тепĕр ят хушăнса пулнисем – 15 (Çĕньял Сăкăт, Çĕньял Хапăс тата ыт. те). Вĕсенчен ытларахăшĕ Вăрнар, Çĕрпӳ, Шупашкар районĕсенче вырнаçнă. Асăннă яла пуçарса яракансем шăпах çак тăрăхсенчен пулнă-тăр.

Çĕньял тахçанах пысăк ял шутланнă. 1868 çулта Чĕмпĕр кĕпĕрнин Асăну кĕнекинче палăртнă тăрăх – унта 108 кил пулнă, 655 çын пурăннă. 1911 çулхи çырав тĕлне 201 кил, 1081 çын таран хушăннă. Ял халăхĕ мĕн авалтан çĕр ĕçĕпе пурăннă, выльăх-чĕрлĕх, вĕлле хурчĕ тытнă, апат-çимĕç сутнă, урапа кустăрмисем ăсталанă. XVIII ĕмĕрте ялта икĕ шыв арманĕ пулнă. 1899 çулта шкул уçăлнă.

1931 çулта ялта «Красный флот» колхоз йĕркеленнĕ. Хальхи вăхăтра кунта шкул, фельдшер пункчĕ, вулавăш, клуб, çыхăну уйрăмĕ, спорт площадки, 3 лавкка пур. «Знамя» тулли мар яваплă пĕрлешӳ ĕçлет.



Ева Лисина çыравçă



Раиса Макарова



Александр Антонов



Мария Сулагаева



Карина Николаева



Çĕньял шкулĕнче 7-мĕш класра вĕренекенсем

С. Журавлев сăн ӳкерчĕкĕсем.

## АХ, АНЧАХ...

### Çурăк валашка умĕнче

Хăй тĕллĕн ĕç пуçарнисен шăпи тĕрлĕрен килсе тухать. Пĕрисем йывăрлăхра пуçа усмаççĕ, малаллах талпăнаççĕ, теприсен ĕç-пуç ăнса пымасть пулас.

Сергей Исаев (Етĕрне районĕ) тата Александр Кудряшов (Елчĕк) пайтаçăсем ĕçе хастар тытăннă, укçа енчен аптрасах кайман. Анчах ирнĕ çул вĕсен бизнесĕ уксахлама пуçланă пулас, тавар сутăнманнипе хыснана налук тӳлеме пăрахнă. Пултарайман чухне панкрута тухни çинчен Арбитраж судне хут çырса пĕлтермелле. Саккун çапла хушать.

Кредиторсен умĕнчи парăм ӳсни вĕсене вуçех хумхантарман-ши? Хăй вăхăтĕнче укçапа пулăшнисем прокуратурăна çул тытнă. Тӳлевсене тăсса пынăшăн иккĕшĕн те 5-шер пин тенкĕ штраф тӳлеме тивет.

### Янтти пыра ларать

Йĕпреç район сучĕ Сергей Чугаров ĕçне пăхса тухнă. Кĕтмен-туман çĕртен пысăк укçа йăтăнса аннă ун çине: 2012 çулхи çурла уйăхĕнче Перекет банкĕн пулăшĕвĕпе усă курма пултарасси çинчен карас телефонĕпе хыпар илнĕ. Хăй пĕр пус та хывман,темĕнле спонсор тупăннă-тăр.

Перекет банкĕн операторĕн тимсĕрлĕхĕпе пĕр абонент номерне Чугаровăннипе арпаштарнă иккен. Çапла майпа ун кĕсйине 122,75 пин тенкĕ пырса кĕнĕ. Янтă укçана пурте хапăл-çке.

Абонент шăв-шав çĕклесен тин банкрисем чупкалама тытăнаççĕ, Чугарова шыраса тупаççĕ. Укçана хуçине тавăрса памаллах ĕнтĕ, шел, пуяс ĕмĕт путланчĕ.

### Сăрта пулă нумай

Етĕрнери Алексей Торопкинпа Василий Сыбачин таврари чи ăста пулăç шутне кĕнĕ. Çулĕпе икккĕшĕ те çамрăк пулин те шыв хĕрринче ĕмĕрне ирттернисем тупăшаймаççĕ вĕсемпе.

– Сăрта пулă нумай, тытма пĕлместĕр эсир, – шăл йĕреççĕ йĕкĕтсем.

Мĕн вăрттăнлăхĕ пур-ши? Ыттисем пек вăлтапа ларса вăхăта çухатас темен, пулă вăлча сапнă чухне çав вырăнсенче сĕреке лартса хăвараççĕ. Ирпе кайса тĕрĕслеççĕ. Кунта пулă шӳрпи пĕçерме çеç мар, сутмалăх та çитĕ. Аптриш, ку яхăнта ăнмарĕ, çут çанталăк сыхлавĕн инспекторĕсен аллине çакланчĕç.

Районти халăх сучĕ вĕсене пĕреллĕхе каçарнă, çапах район прокуратури хирĕçленĕ хыççăн штраф хучĕç.

### Пĕчĕк ывăлне шеллемен

Хĕрарăм та «хытă» чĕреллĕ пулать. Çĕнĕ Шупашкарта пурăнакан амăшĕ хевтесĕр ачине те шеллемен. Пĕчĕкскере (2011 çулта çуралнă) часчасах пĕччен е кукамăшĕпе хăварнă. Лешĕ, чирлĕскер, ачаранпах церебраль шалкăмĕпе нушаланаканскер, канлĕх тупайман. Хăй вара, сăра-эрехпе туслăскер, ниçта та ĕçлемен, ачин пенси укçипе пурăннă. Пĕлтĕрхи çу уйăхĕнче вăл ывăлне нумай хутлă çуртăн подъездĕнче çĕр каçма хăварнă. Унта ăна йăлтах вăрăм туна çыртса пĕтернĕ. Хайхине хулари ача-пăча сыватмăшне илсе кайма тивнĕ. Авăн уйăхĕнче вара амăшĕ ывăлне килĕнче пĕччен хупса хăварнă. Кӳршисем кун çинчен полици ĕçченĕсене шăнкăравласа пĕлтернĕ, ачана пульницана вырнаçтарнă.

Суд хĕрарăма 10 уйăх ĕçлесе тӳрленме йышăну кăларнă. Ĕç укçин 10 процентне патшалăх илĕ. Унсăр пуçне ăна амăш правинчен хăтарнă.

В. ГРИГОРЬЕВ,
В. ПЕТРОВА.



# Яла куçас шухăш пур

ИТАР-ТАСС агентствинче пысăк хуласенче халăх йышланнипе çыхăннă ыйтусемпе пресс-конференци йĕркелерĕç. Халăх куçăмĕпе социологи тĕпчевĕ ирттернĕ. Тӳрех каламалла, ун пĕтĕмлетĕвĕсем чылайăшне тĕлĕнтерчĕç. Уйрăмах Экономикăн аслă шкулĕн профессорĕн С. Барсуковăн сăмахĕ асра юлчĕ. Ыйтса пĕлнисен (хулара тĕпленнисен) 29 проценчĕ яла куçма хирĕç мар иккен. 25 млн çын ку!

Ял тăрăхĕсен аталанăвĕн проекчĕсене хатĕрлекен тата çĕр йĕркелӳ ыйтăвĕсемпе ĕçлекен ведомство (РосЗем) специалисчĕсем те çав цифрăна илсе кăтартаççĕ. Хулана ялпа улăштарас текенсене чи малтанах ĕç вырăнĕ кăсăклантарать. Паллах, вĕсен çул тăкакĕсене саплаштарас, пособи тӳлес, çурт е хваттер, çĕр лаптăкĕ туяннă чухне çăмăллăхсем парас ыйтусем тухса тăрĕç.

Хальхи саманара хула ырлăхне пăрахса яла çул тытакансене иртнĕ ĕмĕрти 50-60-мĕш çулсенчи çерем çĕр уçнисемпе ан танлаштарăр. Казахстанри е Алтайри уй-хирте палаткăсем карса пурăннă, каярахпа поселоксем çĕкленнĕ, хăшĕ-пĕри унтах пурăнма юлнă. Паянхи çынна ĕçпе çеç илĕртеймĕн. Çурчĕ те кирлĕ, ача сачĕпе шкулĕ те.

Федераци Канашĕн членĕ, Раççейри хресчен (фермер) хуçалăхĕсен ассоциацийĕн ертӳçи В. Плотников патшалăх яла хывакан укçа виçине темиçе хут ӳстерме чĕнсе каларĕ:

– Агропромышленноç комплексне çĕнĕ варкăш вĕрсе кĕртмесен, ял тăрăхĕсене вăхăт ыйтнă пек аталантармасан пĕтĕм ĕмĕт–шухăш путланĕ, – терĕ вăл. –Хулари кашни тăваттăмĕш çын хăйĕн шăпине ялпа çыхăнтарассине ĕненместĕп эпĕ. Ăçтан туртса кăларнă ку цифрăна? Шухăша яракан урăхла тĕслĕхсем пур ман: малашлăх çуккипе çамрăксен 40 проценчĕ хулана туртăнать. Иртнĕ халăх çыравĕнче çĕр-шыв карттиçинче 28 пин ялпа поселока кăтартнă, анчах вĕсенче никам та пурăнмасть вĕтха. Ялсен 28 процентĕнче вунă çын та шутласа кăлараймăн. 2000 çултанпа 12,4 пин шкул хупăннă. Фельдшер пункчĕсен шăпи те çавнашкал. Ку çеç-и? Пульницана каякансен урăх района танккама тивет, машина тытмалла. Шкул е медпункт хупăнсан ял пĕтесси куç кĕрет. Иртнĕ ĕмĕрти тата хальхи аграри политикин тӳнтер енĕсем çавăн патне илсе çитерчĕç. Хресчен çĕртен сивĕнчĕ. Ялтан тухса каякансен 63,9 проценчĕ ĕç укçипе кăмăлсăр, 30 проценчĕ пушă вăхăта мĕнле ирттермеллине пĕлмест.

Хăвăр шухăшласа пăхăр: Раççейре 100-120 млн гектар пулăхлă çĕр усăсăр выртать. Кам сухаласа акĕ ăна? Çапла ыйтрăмăр хуларан яла куçакансен пĕрлĕхĕн ертӳçинчен А. Гуськовран. Вăл каланă тăрăх – пирĕн çĕр-шывра урăх çĕре куçакансен тата çĕр йĕркелĕвĕн программине туса хатĕрлеме вăхăт çитнĕ. Асăннă проекта Гуськов малтан Мускавран 500 çухрăмра вырнаçнă тăрăхсенче сăнаса пăхма сĕнет. Куçакансене хавхалантарма "Çĕр капиталĕ" сертификат памалла. Амăш капиталĕ пек ятран çырса хатĕрлемелле ăна, вара лайăх çĕрсене хапсăнакан тупăнмĕ.

Çĕр сертификачĕ мĕн хака ларасси тавлашу çуратрĕ. Пĕрисем ун виçине 500 пинрен (Мускав облаçĕнче) кая мар тумалла теççĕ, теприсем 3 млн тенке çитересшĕн – Байкал тăрăхĕ валли. Çурт туянмалла е арендăна илмелле, çĕр çинче ĕçлеме хатĕр-хĕтĕр кирлĕ. Сертификата урăх тĕллевпе усă курма юрамасть.

Ялшăн тунсăхланисене ку условисем тивĕçтереççĕ-ши? Татса калама хĕн. Паян ялтă вырăнсенчи çурт-йĕр фончĕн 24,6 проценчĕ централизациленĕ газпа, шывпа, канализаципе усă курать. Ирĕксĕрех çапла ыйтас килет: ыттисем иккĕмĕш сортлă çынсем-и? Тен, çавăнпа ĕмĕрне пылчăк çăрса ирттернĕ доярка е механизатор ачипăчине хулара çын пек пурăнма пуслăр тесе ăсатать.

Калуга облаçĕнчи пĕр район пуçлăхĕ брифингра калани пуçран тухмарĕ.

– Яла ĕçлеме килекен çукпа пĕрех. Аслă шкул пĕтернисем каялла таврăнмаççĕ. Вырăнти вăй питти пысăк хуласене шапаша çӳрет. Регистраци кĕнеки тăрăх вĕсем кунтах шутланса тăраççĕ, анчах çыннине курмастпăр. Тухтăрсем валли темиçе хваттер туса лартнăччĕ, пӳлĕмсене вут хутса ăшăтмаллине пĕлсенех тара пачĕç. Мĕнле тытса чарăн?

Мускаври ăшă та хăтлă кантурсенче ял валли ăслă саккунсем çыракансене хăйсене яла кайса ярасчĕ. "Упа шăтăкĕнчи" пурнăç тути-масине туйса илччĕр. Тĕрĕссипе, ял мĕнле сывланине пĕлмеççĕ-çке вĕсем. Эпĕ шутланă тăрăх – патшалăх тытăмĕнче вăл е ку должноç йышăнма хатĕрленекен çын малтан ял тăрăхĕнче ĕçлесе пăхма тивĕç, вара тин тӳре-шарана ăс кĕрĕ.

Фермерсен пĕрлĕхĕн пĕр съездĕнче Путин та ларатчĕ. Куçран пăхса каларĕç ăна:

– Хăй акса тăвакан çĕр çинче фермера мĕншĕн çурт лартма ирĕк памаççĕ?

Патшалăх ертӳçи тивĕçлĕ ведомствăсене хушу пама шантарнине ĕнентĕмĕр. Унтанпа икĕ çул сисĕнми иртрĕ. Ахăртнех, документ министрсен пӳлĕмĕсенче çĕтнĕ-тĕр. Тӳресен ялан пĕр сăмах – çавăн чухлĕ сĕт суса илнĕ, тыр-пул пуçтарса кĕртнĕ тата ыт.те. Цифра хыçĕнче хирте тапаланакан çынни курăнмасть.

Нумаях пулмасть тепĕр хыпар пĕлтĕмĕр. Ял хуçалăх министерствинче ял тăрăхĕсен инфраструктурине йĕркелемелли регионсен проекчĕсене пăхса тухнă. Пилĕк регион социаллă ыйтусене татса пама хатĕр мар. Эппин çав пуçлăхсем "ял çук – ыйту çук" принципа тĕпе хурса пурăнаççĕ. Унашкал кăлава кирлĕ мар хресчене.

**Александр РЫБАКОВ.**

# Çул ăçталла выртать?

**Пирĕн çĕр-шывăн ял хуçалăхне чĕрĕлĕх кĕртмелли çул-йĕр пуррипе çуккине ăнланса илес тесен юлашки пилĕк çула тиркевлĕ куçпа пăхса хакламалла. Тĕслĕх вырăнне федерацин Атăлçи, Урал тата Çĕпĕр округĕсене илĕпĕр, мĕншĕн тесен вĕсем тыр-пулăн, аш-пăшпа сĕтĕн 40 процентне парса тăраççĕ. 2010–2014 çулсенчи çанталăк кутăнлăшăвне пула хуçалăхсем пысăк çухату тӳсрĕç, панкрута тухнисем патшалăх пулăшăвне кĕтсе илеймен, халăх хулана тарать. Пĕтĕмĕшле лару-тăру чăннипех кăткăс.**

## Пӳлме шăлса тасатнă евĕр

Тишкерĕве тĕш тырăран пуçлар. Пĕлетĕр ĕнтĕ, Ял хуçалăх министерстви иртнĕ çул палăртнă чухлĕ тырă – 92 млн тонна – çапса тĕшĕлени çинчен пĕлтерсе халăха лăплантарма васкарĕ. Çак калăпăшăн 58 млн тонни çеç тавар тырри шутланать, вĕсенчен 10 млн тонни кăна элеваторсене çитсе выртнă, хуçалăхсенче – 26 млн тонна. Пухса кĕртнĕ тырăн пĕрре тăваттăмĕш пайĕ кĕрхи акана, çăнăх авăртма, выльăха тăрантарма кайнă, пĕр пайне чикĕ енче сутнă.

Тепĕр хут калатăп: 92 цифра пирĕншĕн пĕлтерĕшлĕ мар. 58 млн тоннăран "ташламалла". Патшалăх пӳлми тулли çинчен куçăн суяççĕ-çке пире. Сăмахран, 2013 çулхи чӳк уйăхĕнче элеваторсенче 5,2 млн тонна тулă кăна юлнăччĕ. Юлашки 20 çулта кунашкал пĕчĕк саппас нихăçан та пулман. Ирĕксĕрех Казахстан аграрийĕсен куçĕнчен пăхма тивет. Енчен те япăх тухăç илнипе кӳршĕллĕ Китай казахсен пĕтĕм тыр-пулне сутăн илчĕ тĕк, Раççейри 3-мĕш класлă тулă хакĕ çуркуннерехпе 10 пин тенке çитсе ларĕ.

## Суран тӳрленмен

Иртнĕ çул хĕвел çаврăнăш пысăк тухăç панине илтсенех продукцие тирпейлекен предприятисем сутăн илмелли хаксене 12 пинрен 9 пине çити чакарчĕç. Хăйсен производство каяшне вара 8 пинпе сĕнеççĕ. Хресченрен тип çу чĕр таварне 16-18 пин тенкĕпе туяннă пулсан ӳпкелешмелли сăлтав çукчĕ. Тирпейлекен отрасльти пуçлăхсем пĕрпĕринпе калаçса татăлса хак политикине йĕркелесе пыни куç кĕрет. Хресчен тирне сӳнине курмастăр-им? Тĕнче ял хуçалăхĕнче кунашкал тĕслĕх пулман!

Тыр-пул ăнса пулнă çулсенче вăл лавккара йӳнелмелле пек. Тип çу хакĕ чакас вырăнне ӳсни шухăшлаттарать.

Выльăх-чĕрлĕх отраслĕн ăçта кайса кĕмелле? Фураж сахал, апатра протеин çитеймĕсĕр, комбикорм хакланать, какай хăй хаклăхĕ ӳсет. 2013 çул вĕçĕнче кĕтмен çĕртен çăмарта хакланни нумай калаçтарчĕ. Каçарăр та, юлашки икĕ çулта продукци йӳнелнипе вун-вун чăхчĕп фабрики панкрута тухрĕ-çке. Çав хăрушлăха курса тăнă ял хуçалăх ведомстви пĕр татăклă утăм та туманни тĕлĕнтерет. Çăмартан сутăн илмелли хакĕсене икĕ хут пĕчĕклетнипе отрасле тĕппипех пĕтерес çул çине тăчĕç. 2009 çулта сĕт отраслĕне те çавнашкал йывăрлăха кĕртсе ӳкерсе амантрĕç. Суранĕсене паян та тӳрлетеймеççĕ.

## Кивçенрен тухма хĕн

Маларах апат-çимĕç рынокĕнчи Атăлçи округĕн тӳпи пирки каларăм. Типĕ килнĕ çу кӳнĕ тăкаксене никам та тĕп-тĕрĕс шутламан. Çитменнине хуçалăхсем банкран кредит илсе тултарнă, кивçенрен тухса пĕтеймеççĕ.

Халсăрланнă предприятисене хальтерех пулăшасчĕ патшалăхăн. Ĕне кĕтĕвĕн йышĕ чакасси унччен паллăччĕ, анчах министерствăра пирĕн асăрхаттарусене илтмерĕç пулас. Сĕт отраслĕн продукцийĕн калăпăшĕ çуллен 15-16 процент чакнă, 1,5 млн тонна продукци илсе çитереймен.

Халĕ сĕтĕн сутăн илмелли хакне хăпартнипе отрасле çăлма май пур-ши? Продукци хăй хаклăхне чакармасăр нимĕнле ырă улшăну та пулмĕ. Пăру çитĕнтерессии, ĕне какайĕ туса илесси – тăкаклă. 2020 çулхи программăпа килĕшӳллĕн çуллен 37 млн тонна сĕт продукчĕсем хатĕрлеме палăртса хунă. Статистика – пĕр япала. Çак тӳреме мĕнле хăватпа çитесшĕн тӳре-шара? Юлашки çулсенче çĕнĕ йышши ĕне-выльăх комплексĕсем хута кайманпа пĕрех. Беларуçран килекен "сĕт юхан шывĕ" вара тулса тăкăнать.

Тĕллевсем анлă, пархатарлă. Асăннă ведомство пĕлтĕр тĕш тырă комбайнĕсемпе тракторсене инвестици кредичĕпе туянакансене мĕншĕн субсиди уйăрса пама пăрахнине кам та пулин ăнлантарса парĕ-ши? Нимĕç фермерĕ техникăна 6-7 çулта пĕрре улăштарса тăрать, пирĕн – 25-30 çулта. Статистика кăтартăвĕсемпе тутă пулаймăпăр. Хуçалăхсен тупăшлăхне ӳстерсе пымасан, хаксен тан марлăхне пĕтермесен ыррине кĕтни кăлăхах.

**Айрат ХАЙРУЛЛИН,**
**РФ Патшалăх Канашĕн аграри ыйтăвĕсен комитечĕн председателĕн çумĕ.**

## «КАПКĂН» КĔТЕСĔ




**Кăларăма Вячеслав ГРИГОРЬЕВ хатĕрленĕ.**

**Пурнӑç таппи**



# Тӑвалла пулсан та – малалла

**Ял туризмӗ Европӑра тата Америкӑра тахçанах йӗркеленнӗ. Вӑл туристсене ял çывӑхне йыхӑрать, хуçалӑх ӗçӗсене тума хистет. Унсӑр пуçне этем талӑкӗ-талӑкӗпе çут çанталӑкра пулса канать, экологи тӗлӗшӗнчен таса апат-çимӗç çиет. Туризмӑн ку енӗ ытларах Италипе Францире аталаннӑ. Хӑнасем тӗрлӗ çӗр-шывран пуçтарӑнаççӗ. Англипе Германи фермерӗсем те туристсене хапӑлласа йышӑнаççӗ. Ял туризмӗ Раççейшӗн «çамрӑк». Çапах вӑл пирӗн çӗр-шывра та ерипен йӗркеленме пуçларӗ.**



### Ӑçтарах-ши «Упа кӗтесӗ»?

Паллах, ял туризмӗ экологи лару-тӑрӑвӗпе те çыхӑннӑ. Çут çанталӑкра канас тесен илемлӗ вырӑнсем кирлӗ. Çакнашкалли Чӑваш Енре сахал мар. Апла пулсан пирӗн тӑрӑхра туризма аталантарма майсем пурах. Хальлӗхе ку тӗлӗшпе Шупашкар районӗнчи лаша туризмӗн «Заимка» комплексӗ, Тӑвай районӗнчи «Паснерка», «Упа кӗтесӗ», Йӗпреçри «Карӑк ращи» ӗçлеççӗ.

Вулакана Тӑвай районӗнчи «Упа кӗтесӗ» кану базипе паллаштарасшӑн. Ӑна çак районти Енӗш Нӑрваш ялӗнче çуралса ӳснӗ Сергей Дмитриев йӗркеленӗ. «Ку шухӑш 3-4 çул каялла пырса кӗчӗ. Туристсене чӑваш кун-çулӗпе паллаштарма шут тытрӑмӑр юлташпа. Авалхи çуртсем тӑвасшӑнччӗ, вӗсенче электричество çутипе мар, краççынпа ӗçлекен хунарсемпе усӑ курасшӑнччӗ. Анчах май килмерӗ. Çапах кунта чӑваш пурнӑçне, ӗçне-хӗлне сӑнлакан пулӑм чылай. Пире Европа стилӗ кирлӗ мар, хамӑр культурӑна, йӑла-йӗркене кӑтартма пӗлмелле», – терӗ Сергей Николаевич. Йывӑçа касса эрешлес тӗлӗшпе ӳнерçӗ пулнӑран пур çӗрте те унӑн ӗçӗ паларать.

Туристсене вырнаçтарма тӑвата коттедж пур. Кунтах – сауна, хура мунча, утар, кафе. Малашне пахча çимӗç çитӗнтересшӗн, чӑх-чӗп, хур-кӑвакал туянасшӑн. Унсӑр пуçне канма килекене сӗт юр-варӗпе хӑналасшӑн. Çавна май качака, ӗне те пулӗ. Ача-пӑча валли пони те илесшӗн. «Туристсем усӑ сывлӑшпа киленнисӗр пуçне экологи тӗлӗшӗнчен таса апат-çимӗç çиме пултарччӑр, выльӑх-чӗрлӗхе ачашлаччӑр, çулла – пулӑ тытса, хӗлле çунашкапа, йӗлтӗрпе ярӑнса киленччӗр», – малалла тӑсӑлать калаçу çӑмхи.

Кану базиилемлӗ вырӑнта вырнаçнӑ. Маларах кунта колхоз сачӗ пулнӑ. Улмуççисем халӗ те çимӗç параççӗ. Чылайӑшӗ ватӑлнӑран вӗсене çӗнетеççӗ е урӑх йывӑç лартаççӗ. Ку тӑрӑх кӑмпа-çырларан та пуян. 20 гектар çӗре сутӑн илнӗ Сергей Николаевич. Çак лаптӑкран йывӑç питомникӗ те пур. Унта Канадӑран илсе килнӗ кӑвак чӑрӑш, туя, хамӑр тӑрӑхри чӑрӑш çитӗнеççӗ.

«Кану базине мӗншӗн «Упа кӗтесӗ» ят патӑр?» – кӑсӑкланатӑп эпӗ. «Кунта вырӑнӗ çавнашкал, çырма-çатраллӑ. Çулӗ те çывӑх мар. Чӑвашсем ун пеккине «упа шӑтӑкӗ» теççӗ-çке», – пулчӗ хурав.

Çӑтмах вырӑн Енӗш Нӑрваш ялӗн территорийӗнче вырнаçнӑ. Ӑна иртнӗ çул çӗртме уйӑхӗнче савӑнӑçлӑ лару-тӑрура уçнӑ. Ытти хуларан канма килекен те чылай. Ентешсене те кайса курма, чун киленнипе канма сӗнетӗп.

### Страус та, тӗве те

«Кашни фермер ял туризмне аталантарма пултарать», – пӗлтерет Тутарстанри хресчен (фермер) хуçалӑхӗсен ассоциацийӗн ертӳçи Камияр Байтемиров. Ку тӗлӗшпе вӗсен пӗтӗм условипур. Сывӑрмалли пӳлӗм вырӑнӗнче – аслӑк. Шапшурӑ, крахмалланӑ простынь те кирлӗ мар. Утӑ шӑрши сӑмсана çурать. Ял çывӑхӗнче пӗчӗк юхан шыв пурах. Канма килекен унта пулӑ тытма пултарать. Тепри, харсӑрри, фермера хуçалӑхри ӗçсене пурнӑçлама пулӑшать: выльӑх-чӗрлӗхе апатлантарать, ӗне сӑвать. Пӗлтӗр Высокогорски районӗнчи Ямашурма ялӗнчи Габдельахмат Котдусов фермер ял туризмӗн проектне хатӗрленӗ. Вӑл çирӗм страус туяннӑ, çитес вӑхӑтрах наци кухнин çуртне туса пӗтерӗ. Кил-тӗрӗшре унӑн пекарня та пур. Сӗт юрварӗпе районти ытти фермер тивӗçтерӗ. Унсӑр пуçне Котдусов тӗрлӗ ӑратлӑ кӑвакал, ултӑ акӑш çитӗнтерет. Çитес вӑхӑтрах кӑмӑс кӑларассине йӗркелесшӗн. Лашисем çителӗклӗ унӑн.

Ямашурма ялӗнче пилӗк лавкка, вӗсенчен виççӗшӗ – фермер хуçалӑхӗсен. Урамсенче – асфальт çул. Кун пек яла туристсене илсе килме те намӑс мар. Çавна май Котдусов ытти фермерпа калаçса татӑлнӑ, вӗсем те ял туризмне аталантарас тӗлӗшпе ӗçлӗç. Тутарстан ял хуçалӑх министрӗ Марат Ахметов пӗлтернӗ тӑрӑх – ял туризмӗ малтанах Хусан çывӑхӗнче йӗркеленӗ. Каярахпа вара республикӑн ытти кӗтесӗнче вӑй илӗ.

Пушкӑртстанри Валерий Старков та агротуризма аталантаракансенчен пӗри шутланать. Вӑл ӑна хресчен (фермер) хуçалӑхӗн никӗсӗ çинче пуçарнӑ. Чи малтан 200 сурӑх вырнаçмалӑх вите тунӑ. Утӑ хума аслӑк пур. Туристсене чарӑнма пысӑках мар вакун вырнаçтарнӑ. Вӑхӑт иртнӗçемӗн çак хуçалӑх çывӑхри Çтерлӗ, Ишимбай тата Салават хулисенче пурӑнакансене самаях кӑсӑклантарнӑ. Мӗншӗн тесен объект çав тери илемлӗ вырӑнта вырнаçнӑ. Çывӑхрах – Шихан тӑвӗсем, Шурӑ Атӑл юхан шыв, «Шиханы» туллӑ-сӑртлӑ йӗлтӗр бази... Унсӑр пуçне хӑнасене ял хуçалӑхӗ, ӗлӗкхи савӑт-сапа, ӗç хатӗрӗ илӗртет. Хӑна çурчӗн пӗрремӗш хутӗнче кафе вырнаçнӑ. Унта – вырӑнти çимӗçрен хатӗрленӗ апат-çимӗç. Малашне туристсене илӗртме предпринимательлаша, тӗве тытасшӑн, усӑлса çӳреме велосипед, йӗлтӗр туянасшӑн.

Ял туризмне аталантаракансем Пушкӑртстанри ытти тӑрӑхра та пур. Вӗсем пурте çут çанталӑкӑн илемлӗ те асра юлмалли вырӑнӗсене суйласа илнӗ. Алтайра, Карелире тата Калининград облаçӗнче те унӑн сӗмӗ самаях сарӑлнӑ. Çут çанталӑк пуянлӑхӗпе пӗрлех культурӑпа искусство, истори çул-йӗрӗ аталанать, вырӑнти халӑх йӑли-йӗрки, юрри-ташши упранать.

**Валентина ПЕТРОВА**.


**РЕКЛАМА**

## Студентсемпе аспирантсене – стипенди

Раççей ял хуçалӑх банкӗ çулсерен çӗршыври аграрин аслӑ шкулӗсенче вӗренекен чи пултаруллӑ студентсемпе аспирантсене ятран стипенди парса хавхалантарать. 2013 çулхи кӑтартусемпе Чӑваш патшалӑх ял хуçалӑх академийӗн виçӗ студенчӗпе аспиранчӗ стипендие тивӗçнӗ. Банкӑн Чӑваш Енри филиалӗн директор çумӗ Николай Федотов стипендиатсене аслӑ шкулти ӑсчахсен канашлӑвӗнче свидетельство парса чысланӑ.

Банкӑн стипенди программине филиалта 2007 çулта хута кӗртме тытӑннӑ. Программӑн тӗллевӗ – пултаруллӑ çамрӑксене хавхалантарасси. 2007-2013 çулсенче Раççей ял хуçалӑх банкӗн ятарлӑ стипендине çӗр-шыври 200 студентпа аспирант илнӗ, çав шутра Чӑваш Республикинчен – 46. Ытти регионсемпе танлаштарсан лайӑх кӑтарту. Пӗтӗмпе вара стипендиатсене банк пӗр миллион тенке яхӑн укça уйӑрса панӑ.

Сӑмах май, Раççей ял хуçалӑх банкӗ çӗр-шыври аслӑ шкулсемпе тачӑ çыхӑнса ӗçлет: юлашки курссенче вӗренекенсене практика ирттерме майсем туса парать, ӗçе çамрӑк специалистсене явӑçтарать, ятарлӑ стипенди уйӑрать, банкра ӗçлекенсене вӗрентсе хатӗрлет. Банкӑн тӗп офисӗнче, регионсенчи филиалӗсенче студентсем валли вӗренӳ практикине йӗркелет. Пултаруллӑ çамрӑксемшӗн диплом илнӗ хыççӑн банкра ӗçлеме çул уçӑлать.

Тепӗр çӗнӗлӗх – финанс ыйтӑвӗсемпе ӗçлекен студентсен ятарлӑ ушкӑнӗсене йӗркелени. 2012-2013 çулсенче 51 филиалта студентсем ӗçленӗ, çав шутра Чӑваш Енре те. Вӗсем ялта пурӑнакансене банк ӗçӗхӗлӗпе, çӗнӗлӗхсемпе паллаштарнӑ.

## Раççейре – çиччӗмӗш

2014 çулта Пӗтӗм тӗнчери Tht Banker (Великобритани) финанс изданийӗ тата Brand Finance (Великобритани) консалдинг агентстви палӑртнӑ тӑрӑх – Раççей ял хуçалӑх банкӗ пирвайхи хут тӗнчери пысӑк банксен брендӗн рейтингне кӗнӗ. Асӑннӑ кӑларӑм хаклавӗпе Раççей ял хуçалӑх банкӗ çӗр-шыври банксем хушшинче çиччӗмӗш вырӑн йышӑнать. Унӑн брендӗн пӗтӗмӗшле хакӗ 283 млн доллар. Банк брендӗ "А" шайпа танлашать. Çакӑ вӑл кредит рынокӗнче çирӗп тӑнине кӑтартать.


## ЧӐВАШ НАЦИ ТЕЛЕКУРАВӖН ЭРНЕЛӖХ ПРОГРАММИ

**Тунти кун, пуш уйӑхӗн 3-мӗшӗ**
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КӐЛАРӐМӖ
18.45 «ИЛЕМПИ УРОКӖСЕМ» (0+)
19.00 «КАÇХИ ТӖЛ ПУЛУ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
20.00 «ДЕРЕВО ДРУЖБЫ» (12+)
20.30 «АКИЛБУПСЕР» (0+)
20.45 «СЕРДЦЕ НА ДВОИХ» (12+)
23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КӐЛАРӐМӖ
23.15 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
23.30 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
20.00 «ДЕРЕВО ДРУЖБЫ» (12+)

**Ытлари кун, пуш уйӑхӗн 4-мӗшӗ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КӐЛАРӐМӖ
6.15 «ЧӐВАШ ХАЛӐХ ЮМАХӖСЕМ» (0+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
6.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КӐЛАРӐМӖ
18.45 «ТӖПЛӖ КАЛАÇУ» (12+)
19.00 «ÇӖР ТИВЛЕЧӖ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
20.00 «КОМФОРТНЫЙ ГОРОД» (12+)
20.30 «ПОШЕПТУШКИ» (0+)
23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КӐЛАРӐМӖ
23.15 «ТӖПЛӖ КАЛАÇУ» (12+)
23.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
00.00 «КОМФОРТНЫЙ ГОРОД» (12+)

**Юн кун, пуш уйӑхӗн 5-мӗшӗ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КӐЛАРӐМӖ
6.15 «ТӖПЛӖ КАЛАÇУ» (12+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КӐЛАРӐМӖ
18.45 «ЧӐВАШ ХАЛӐХ ЮМАХӖСЕМ» (0+)
19.00 «ÇИТМӖЛ ТЕ ÇИЧЧӖ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
20.00 «ПРАВИТЕЛЬСТВЕННАЯ СВЯЗЬ» (12+)
20.30 «ПОШЕПТУШКИ» (0+)
23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КӐЛАРӐМӖ
23.15 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
23.30 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
23.45 «ПРАВИТЕЛЬСТВЕННАЯ СВЯЗЬ» (12+)

**Кӗçнерни кун, пуш уйӑхӗн 6-мӗшӗ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КӐЛАРӐМӖ
6.15 «ЧӐВАШ ХАЛӐХ ЮМАХӖСЕМ» (0+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
6.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КӐЛАРӐМӖ
18.45 «ТӖПЛӖ КАЛАÇУ» (12+)
19.00 «ПЕХИЛ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
20.00 «ЗНАКОМЫЕ ЛИЦА» (12+)
20.30 «ПОШЕПТУШКИ» (0+)
23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КӐЛАРӐМӖ
23.15 «ТӖПЛӖ КАЛАÇУ» (12+)
23.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
00.00 «ЗНАКОМЫЕ ЛИЦА (12+)

**Эрне кун, пуш уйӑхӗн 7-мӗшӗ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КӐЛАРӐМӖ
6.15 «ТӖПЛӖ КАЛАÇУ» (12+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КӐЛАРӐМӖ
18.45 «ИЛЕМПИ УРОКӖСЕМ» (0+)
19.00 «ЭХ, ЮРРӐМ, ЯНӐРА» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
20.00 «ЗАКОНОДАТЕЛИ» (12+)
20.30 «НАОБУМ» (12+)
23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КӐЛАРӐМӖ
23.15 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
23.30 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
00.00 «НАОБУМ» (12+)

**Шӑмат кун, пуш уйӑхӗн 8-мӗшӗ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КӐЛАРӐМӖ
6.15 «ИЛЕМПИ УРОКӖСЕМ» (0+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
6.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
9.00 «КАПИТАНА КАЧЧА ТУХАС». ЧӐВАШЛА КУÇАРНӐ ФИЛЬМ (12+)
11.00 «АКИЛБУПСЕР» (0+)
11.30 «ПРАВИТЕЛЬСТВЕННАЯ СВЯЗЬ» (12+)
17.00 «КАÇХИ ТӖЛ ПУЛУ» (12+)
17.30 «ЗНАКОМЫЕ ЛИЦА» (12+)
18.00 «КОМФОРТНЫЙ ГОРОД» (12+)
18.30 «ВСЕ ТОЛЬКО НАЧИНАЕТСЯ...» ПРАЗДНИЧНЫЙ КОНЦЕРТ (12+)

**Вырсарни кун, пуш уйӑхӗн 9-мӗшӗ**
9.00 «МУСКАВ КУÇÇУЛЕ ӖНЕНМЕСТ». ЧӐВАШЛА КУÇАРНӐ ФИЛЬМ (12+)
17.00 «ÇӖР ТИВЛЕЧӖ» (12+)
17.30 «ПЕХИЛ» (12+)
18.00 «САМЫЙ ЛУЧШИЙ ПАПА». ГОРОДСКОЙ КОНКУРС (6+)

## УЙĂХ КАЛЕНДАРĔ

| Число, кун | | Нарăс, 26 – юн кун | Нарăс, 27 – кĕçнерни кун | Нарăс, 28 – эрне кун | Пуш 1 – шăмат кун | Пуш, 2 – вырсарни кун | Пуш, 3 – тунти кун | Пуш, 4 – ытлари кун |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ХĔВЕЛ | тухать | 7.51 | 7.48 | 7.46 | 7.43 | 7.41 | 7.38 | 7.36 |
| | анать | 18.17 | 18.20 | 18.22 | 18.24 | 18.26 | 18.28 | 18.30 |
| Кун тăршшĕ | | 10.28 | 10.32 | 10.36 | 10.41 | 10.45 | 10.50 | 10.54 |
| УЙĂХ | тăхри | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | çĕнĕ уйăх (11.58) | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать |
| | кунĕ (12 сехет тĕлне) | 27-мĕш кун | 28-мĕш кун | 29-мĕш кун | 1-мĕш кун | 2-мĕш кун | 3-мĕш кун | 4-мĕш кун |
| | | Ту качаки паллинче | Шыв тăкан паллинче | Шыв тăкан паллинче | Пулă паллинче | Пулă паллинче | Сурăх паллинче | Сурăх паллинче |

ХИСЕП

# Ятлă çынна ял савать



Ĕнесемпе вăкăрсене лаша вырăнне кӳлнĕ тапхăрта ӳснĕ вăл. Ыттисем пекех шĕшкĕ кăчки, мăян вăрри, шăн çĕр улми çинĕ. Çитĕннисемпе пĕрлех тырă вырнă. Нихăçан та ĕçрен пăрăнса юласси çинчен шухăшламан. Сăмахăм Муркаш районĕнчи Çатракассинче пурăнакан Леонид Петрович Шапошников çинчен.

«Свобода» колхозра сысна фермине ертсе пыма тытăнсан унăн ячĕ таврана сарăлнă. Малтанах вăл фермăпа унăн таврашне тирпей-илем кĕрттерет. Ферма территорийĕнче киоск туса лартаççĕ, çăвăнмалли душ тăваççĕ. Вăл тăрăшнипех ферма ĕçченĕсем тĕрлĕ хулана çитсе кураççĕ. Мускав таранах. Ушкăнпа кану çуртне, спектакльсене çӳреççĕ. Ферма сывăхĕнче усăсăр выртакан çĕре те чун кĕрет. Кунта хăяр, купăста, помидор, çырла ӳстерме тытăнаççĕ. 1980-90 çулсенче коллективăн çулталăкри тупăшĕ 150 пин тенкĕрен иртет. Ку вăхăтра вăл укçапа 30 автомашина илме май пулнă. Сыснасем талăкра 700-1050 грамм таран ӳт хушнă. Кашни амаран 20-23 çура илнĕ. Ăратлă çурасене республикăри тата унăн тулашĕнчи хуçалăхсене сутнă.

Леонид Петрович ертсе пынă ферма çинчен кинофильм та ӳкернĕ. Çав çулсенчи кăтартусем тăрăх çĕр-шыври ăратлă сысна ĕрчетекен заводсемпе хуçалăхсем хушшинче вăл ерсе пыракан ферма пĕрремĕш вырăн йышăннă, 5000 тенкĕ преми çĕнсе илнĕ.

Профессорсем Шапошникова ял хуçалăх институтĕнче вĕренекенсене хăйсен çитĕнĕвĕ çинчен каласа пама Шупашкара пĕрре мар чĕнсе илнĕ.

Пуш уйăхĕнче 83 çул тултаракан ветеранăн архивĕнче вун-вун грамота, диплом, тав хучĕ, медаль упранать. Ĕç ударникĕ ята тивĕçнĕ сумлă ентешĕмĕр паян кун та машинăпа çӳрет. Тăтăшах çул çинче куратăп ăна, канăçсăр чунлăскере. Кама кăна вĕрентмен-ши вăл çĕлĕк çĕлеме?

– Хушаматăмăр та çĕлĕк çĕлениччен пулса кайнă пулĕ, – тет Леонид Шапошников. Сăмах май, халĕ те пăрахман вăл çак ĕçе. Мăшăрĕпе, Ираида Григорьевнăпа, ултă ача çуратса ӳстернĕскерсем, 57 çул ĕнтĕ çума-çумăн, пĕр-пĕрне килĕштерсе пурăнаççĕ. Туслă çемье ыттисемшĕн ырă тĕслĕх. Ятлă çынна ял савать тени вĕсем çинчен каланăнах туйăнать.

**Илья ЯКОВЛЕВ.**

# Пысăк çуртра хам анчах

«Упра мăшăрна» текен юрра илтсен хурланса макăрас килет. Пурăннă чухне пĕрпĕрне мĕн кăна каламастпăр-ши?! Кӳрентерессине те пĕлместпĕр. Ĕмĕр-ĕмĕр пурăнассăн туйăнать çĕр çинче. Пĕччен юлсан вара пуç ыратиччен макăратпăр.

Упăшка чĕрĕлсе тăрас тăк пĕрре те кӳрентерместĕм ăна. Тепĕр чухне нимĕн çукран чăркăшнисем те пулнă. Укçа-тенкĕ çитменсен те çатăртатса илеттĕм. Уншăн мăшăр çеç айăплă-ши? Е ют хĕрарăмпа сăмахланăшăн та чăркăшас шут пурччĕ. Ара, çынпа çын калаçмасăр пулмасть. Кирлĕкирлĕ маршăн вăрçăнмалла-ши? Паллах, çук. Анчах кая юлса ăнлантăм çакна. Кирлĕ шухăш кайра çӳрет çав.

Упăшкапа хĕрĕх çул пурăнтăмăр. Ылтăн туя пĕрле ирттерме ĕмĕтленетчĕ вăл. Шел, йывăр чир ăна çемьерен уйăрчĕ. Ывăл-хĕр телейне кураймарĕ. Ултă ача çуратса ӳстертĕмĕр. Пурте ĕçчен, маттур çитĕнчĕç. Кашнийĕ хăйĕн çемйипе пурăнать халĕ. Кĕçĕннине те кин хулана илсе кайрĕ. Яла час-часах килсе çӳреççĕ пулсан та тунсăхлатăп. Эпĕ пĕччен пурăнма хăнăхман. Ман çумра яланах ача-пăча, мăшăр пулнă. Халĕ пысăк çуртра хам анчах. Пĕччен юлассине пĕлнĕ пулсан çакнашкал пӳрт лартман пулăттăмăр. Ун чухне упăшкана та, хама та йывăр килчĕ. Ачасене çитĕнтермелле, çурт тумалла. Хамăр пирки шухăшлама май та пулман. Вăл – механизаторта, эпĕ фермăра вăй хутăм. Кил-çурт хăпартни çеç çителĕксĕр, чăх вĕçсе каçмалла мар картахурлăтă çавăртăмăр. Кӳршĕ-аршăран юлас килмерĕ. Шел, çĕнĕ пӳртре савăнса пурăнаймарĕ упăшка, çĕре кĕчĕ. Тăрăшни харама кайрĕ. Кивĕ пӳртре ырă-сывă мăшăрпа юнашар пурăннă пулăттăм. Пĕччен пурнăç уй-хирти тăлăх хурама евĕр. Ăна аса та çапать, вăйлă çил те лăскать. Тепĕр чухне ыйхă вĕçет. Çын пулсан калаçса ирттерĕттĕм вăрăм каçсене. Сăмах ваклама та юлташ кирлĕ. Кун пек чухне пуçа йывăр шухăшсем пăраланçĕ, иртнине аса илтереççĕ. Малашне мĕнле пурăнмалла-ши? Кам шыв парĕ е апат пĕçерсе çитерĕ? Ачасем яла пурăнма килесси пирки шарламаççĕ. Вĕсен – хăйсен çемйи. Чуна йăпатмалла та малалла талпăнмалла. Кӳршĕ-аршăпа пĕр чĕлхе тупма тăрăшмалла. Унран лайăх тăван тупаймастăп. Ун-кун ыратсанах вĕсем патне каçатăп, пулăшу ыйтатăп. Пӳрт умне те кӳршĕ-аршă ачи юртан тасатать. Тăван ачасем, мăнуксем хуларан килессе кĕтсен юр айнех пулатăп.

Хĕрарăмсем, упăшкăрсене упрама пĕлĕр. Пурнăç çулне мăшăрпа утса тухниччен лайăххи, сăвапли нимĕн те çук. Пĕрпĕрнипе тату пурăнăр.

**Мария ИВАНОВА. Канаш районĕ.**

АСĂРХАНАСЧĔ

• Ача-пăча пӳлĕмĕнче телевизорпа компьютер таврашĕ пулмалла мар.

• Пĕчĕк ачан карас телефонĕпе май пур таран сахалтарах усă курмалла. Хăлха çумне тытнă вăхăтра тата ӳт çумне чиксе çӳренĕ чухне вăл уйрăмах хăрушă.

## Халал хутне – çĕнĕрен

**? Малашлăха пĕлмесĕрех кил-çурта хĕрĕме халаллараăмăр. Халĕ вăл çемйипе Самар тăрăхĕнче пурăнать. Инçе çула пула килсе çӳреймест. Унсăр пуçне кунта кусса килес шухăш та çук. Пире мăнукпа кин пăхаççĕ. Вĕсем Сăнав поселокĕнче пурăнаççĕ. Эпĕ кил-çурта вĕсем çине çĕнĕрен куçарасшăн. Ĕçе мĕнрен пуçламаллине пĕлместĕп. Тĕплĕнрех çырса кăтартăр-ха, тархасшăн.**

**Юлия ИЛЬИНА. Çĕрпӳ хули.**

Юлия Прокопьевна, кун пирки чи малтан хĕрĕрпе канашлăр. Çывăх çын ăнланма кирлĕ. Енчен те хирĕçлесен, суд органĕсенчен пулăшу ыйтма тивет. Паллах, суд урлă ĕç вăраха тăсăлать. Çавăнпа та хĕрĕрпе килĕшсе татăлма тăрăшăр. Документ пухасси те çăмăл мар. Вĕсене каярахпа нотариус патĕнче çĕнĕрен çирĕплетмелле.

КУЛАР-И?

**КОСМЕТИКА ПУР!**

Амăшĕ çитĕнекен хĕрне ăс парать:

– Чипер пулас тесен ытларах пахча-çимĕç çимелле, диета тытмалла...

– Диетăпа чăрманас килмест. Манăн косметика пур!

**ТĔЛĔНӲ**

– Асанне, блокада вăхăтĕнче чăнах та çăкăр пулман-и? – тĕпчет мăнукĕ.

– Пулман, мăнукăм, пулман.

– Эппин, сар çăва тӳрех кăлпасси çине сĕрсе çиеттĕрччĕ-им? – тĕлĕнет ача.


РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ

**ПРОДАЮ**

**2. АКЦИЯ! Блоки керамзитобетонные** 20х20х40 – **33** руб., 12х20х40 – 29 руб., 10х20х40 – 25 руб. Высокое кач-во. Доставка. Т. 89196543499.

**3. АКЦИЯ! Кольца колодезные** диам. 0,7 м, 1 м, 1,5 м. Д-ка манипулятором. Бурение. Т. 89196543499.

**33. Гравмассу,** гравий, **песок,** щебень, **керамзит.** Доставка. Т. 89053465671.

**45. Песок, гравмассу, щебень.** Д-ка. Т. 89196543499.


## Нарăсăн 1-мĕшĕнчен – малтанхи хакпа

***Хисеплĕ вулакансем! «Хыпар» Издательство çурчĕн кăларăмĕсене 2014 çулăн II çурринчен илсе тăмашкăн нарăсăн 1-мĕшĕнчен тытăнса пуш уйăхĕн 31-мĕшĕччен малтанхи хаксемпе çырăнтараççĕ***

| КĂЛАРĂМСЕМ | ИНДЕКС | ÇЫРĂНТАРУ ХАКĔСЕМ: Почта уйрăмĕсенче | «Чăваш пичет» киоскĕсенче | «Советская Чувашия» киоскĕсенче | Редакцире |
|---|---|---|---|---|---|
| Хыпар | 54800 | 460-86 | 279 | 279 | 144 |
| Хыпар-шăмат кун | 78353 | 218-22 | 141 | 141 | 90 |
| Çамрăксен хаçачĕ | 54804 | 272-22 | 231 | 231 | 144 |
| Чăваш хĕрарăмĕ | 11515 | 243-18 | 213 | 213 | 141 |
| Сывлăх | 11524 | 130-98 | 111 | 111 | 81 |
| Кил-çурт, хушма хуçалăх | 54806 | 122-70 | 111 | 111 | 81 |
| Хресчен сасси | 54838 | 226-62 | 162 | 162 | 114 |
| Хресчен сасси-Кил | 43887 | 102-90 | 84 | 84 | 61-20 |
| Тăван Атăл | 11529 | 251-76 | 216 | 216 | 168 |
| Капкăн | 24608 | 122-10 | 105 | 105 | 87 |
| ЛИК (Литература. Искусство. Культура) | 83429 | 127-92 | 120 | 120 | 100 |
| Вести Чувашии | 54807 | 220-08 | 186 | 186 | 144 |
| Собрание законодательства Чувашской Республики | 54847 | 695-88 | 660 | 660 | 570 |
| Тантăш | 54802 | 192-18 | 132 | 132 | 90 |
| Самант | 73208 | 155-64 | 156 | 156 | 120 |
| Тетте | 73771 | 119-58 | 111 | 111 | 90 |


«ХРЕСЧЕН САССИ» Обществăпа политика хаçачĕ Индекс 54838 Учредителĕ – ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви, «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ

ДИРЕКТОР-ТĔП РЕДАКТОР – А.П. ЛЕОНТЬЕВ. Редактор – Е.Н. НИКОЛАЕВА (тел. 56-34-63)

Редакци адресĕ: Шупашкар, И. Яковлев пр., 13. Телефонсем: директор-тĕп редактор – 56-00-67, тĕп редактор çумĕ – 62-04-54, пайсем – 56-34-63, 62-50-06, 28-86-68, реклама пайĕ тел./факс – 28-83-70. Факс (8352) 62-50-06

www.hypar.ru, e-mail: atal-volga@mail.ru

Хаçата 2013 çулхи раштав уйăхĕн 10-мĕшĕнче Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсемпе массăллă коммуникацисен сферинчи саккунсене пăхăннине сăнаса тăракан службин Чăваш Республикинчи управленийĕ ПИ ТУ 21-00305[1] регистрациленĕ. Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă хатĕр оригинал-макетран «Чăваш ЕН» ИПК» АОУ типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар, И. Яковлев пр-чĕ, 13.

Графикпа 17 сехетре алă пусмалла. 17 сехетре алă пуснă. Заказ 678 Тираж 4369

* Рекламăпа пĕлтерӳсем. Реклама тексчĕсемпе пĕлтерӳсемшĕн вĕсене паракансем яваплă.